К 84.89(=Чув)
К27
Ч-42099

# Марина



## Çур çĕр варринчи хĕвел

# Карягина

Национальная библиотека ЧР
4-042099

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Марина



# Карягина

## Çур çĕр варринчи хĕвел

Сăвăсем,
поэмăсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2009

УДК 811.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-5
К 27

ПРОВЕРЕНО
2010 28 СЕН 2017

И-42099
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Карягина М.Ф., 2009
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2009

ISBN 978-5-7670-1667-9



## Хура пăнчă

Асăрханман чухне епле таса
Тĕнчен пĕр тапхăр çеç шап-шур чĕкеçĕ:
Ыттисене те вырăнлă туса
Юр пĕрчисем (пĕчĕкленсе!) вĕçеççĕ.

Мĕн чухлĕ шурă кайăк тӳпере —
Хурисене тек курмасса шанмалăх!
Çак авăк, тен, вĕççĕрлĕхре пĕрре —
Шап-шур чĕкеç вĕçевĕллĕ çанталăк.

(Пысăкланса!) пĕр пăнчă çывхарать.
Хура пĕр пăнчă çеçчĕ-çке — хуралăх!..
...Юр çуса хурать.
Шур чĕкеççемшĕнех уçса хур алăк.

*2004*

* * *

Вӗҫекенни — вӗҫет:
Кам ҫӑтмахра, кам чӑтлӑхра вӗҫет...
Эп читлӗхре те — читлӗхпе вӗҫетӗп!

*2003*

* * *

Уҫас ҫулӑм — ҫул мар: ҫип-ҫинҫе!
Эрешмен пек пурнап ҫип ҫинче.
Ман эреш — кӗвӗри геометри:
Ҫул палли... сас палли... —
кӗвӗлетри?

*2003*

* * *

Ункӑра пӗр авӑк савӑк:
Ункӑ — ытаму:
ӗмӗр — авӑк...

*1998*

* * *

Манса каяссӑм пур ята —
Хам пек чӗнетӗп ҫич юта.

Хура та шурӑ ҫак урам,
Йӑлт йӑрӑм-йӑрӑм...
Пулин: тек туйӑнтӑр харам
ҫук пусма хурӑм...

Малтан хури ҫине пусма
астарчӗ шурӑ...
Ӑҫта илсе каять пусма?
Ас тарчӗ, Турӑ:

пӗччен манассӑм пур ята —
Хам пек чӗнеп мӗнпур йытта.

*2003*

* * *

Куç суйласа илнисем —
куç умĕнче
куçăм енче —
ĕмĕлкесем куçни...

ĕмĕрĕмсем —
ĕнерсене
ĕнĕрлесе
ĕмĕрлеме
имĕш...

ан килĕш, —
теччĕр!
...пире
пирĕштисем
халь
евĕрлеччĕр.

*1996*

* * *

Ир
те
тăвăл:

ĕмĕр
иртет-и...

вăл
çăвăрне
ĕмĕртет

ăмăр
тӳпе —
куç хупанки
хӳттинче:

лап!
сӳнсе ларчĕ
тĕнче...

*1996*

* * *

Пĕлмен уяв,
кĕтмен уяв,
мана чĕнмен уяв,
çил тăр пĕччен хатĕрленет,
кама чĕнет? —
уя...

çулçăсене (ытла вăрах!)
савать, сапать, сарать...
ырра марах, ырра марах —
кăра кĕре кура...

...юра, уяв!
юрат, уяв!
ырра уяв — юра!
уяв — шап-шур туя!..

*1998*

* * *

Ура утать-и ҫӳлелле? —
Урам утать-и? —
Е ту
тӳпе йӑтса тӑрасшӑн-и элле

ку туйӑм-
шӑн:
тумла пӑрсем те
ӳсме пуҫлаҫҫӗ
ту тӑрринелле

тӗнче
вӗҫсе
ҫӳрет
ҫулла
юр
ҫунӑн...

*1997*

* * *

Уйрăм эпир,
пĕрле — уйрăм:
шурăпа хура,
турăпа чура,
çурма уй-ăх
(çурри — урăххин).

Уйрăм эпир,
пĕрле — уйрăм:
йĕкĕрешсем пек
(йĕкел тĕшши те
хуппипе
тату),
«ут» та «ту»,
тута.

Уйрăм эпир,
пĕрле — уйрăм
(чĕрмен тĕк пек):
пекĕ,
ӳтпе кĕпе,
çиçĕм çурнă
тӳпе...

*1996*

* * *

«Ҫурта ҫунатчӗ сак ҫинче,
Ҫурта ҫунатчӗ...»

*Г. Айхи сӑвви урлӑ килнӗ*
*Б. Пастернакран*

Йӗпхӳ ҫӑватчӗ пит ҫине,
Йӗпхӳ ҫӑватчӗ —
Мана (сана та, пӗччене)
Темрен ҫӑлатчӗ...

Хура та шурӑччӗ тӗнче —
Йӗрсем ҫӗтетчӗҫ...
Ҫулҫӑланас тӗм патӗнче
Тутам тем тетчӗ...

Йӗпхӳ-и — сассӑр кӑшкӑрни!
Пырта — хӗрхӳччӗ.
Ҫурхи йӗпхӳччӗ куҫ курми,
Ҫурхи йӗпхӳччӗ...

*1997*

* * *

Алăсăр, сăмахсăр, сассăр
туйăн пин сăмахăн: кил-ĕ!-
н-
е-
р килменнисемшĕн,

Хĕвел курнă,
уйăх илнĕ
сывлăм пĕрчисемшĕн...
ан кай, ан кай!
н
к
а
й!

*1997*

* * *

Кӗр вӗҫӗ кӗҫ.
Тӗссем — туссем пек —
Куҫа вӗҫсе кӗреҫҫӗ кӗҫӗр —
Хӗл чӑтӑм-тӳсӗмне тӗсесшӗн.

*2000*

* * *

Эс — шартлама хӑвна юраншӑн
(юр пикелле юрарӑм ҫав —
юр арӑм)
хӗл шартлами «юр, ан шӑн» тет:
хӗртет, хӗр-тет...
юр ӑ-шӑнать!

чӗр тымарсен ӳсес хӑвачӗ
хушӑнать...

*2000*

* * *

Юра тупа арпаштаратăп
юратупа курми пулса:
ту тăррине тăрса
çил çиллине чаратăп.

Çил чарăнать.
ăшă! —

...Ту çук!

Ту пек шăналăк
ту пулман —
шăн çут çанталăк

(çапла ман алă
хурăмне упрать
пуш-пушă çанă).

Тусем,
çунат сулса,
ав вĕçсе кайрĕç
шур тӳпе пулса...

*2000*

* * *

Çут пуласлӑха çитес тесе
Пурӑнатӑп çук пек йӳтесе.

(Юриех ӑнлан эс «ю»... тесе —
Кам каларӗ эп пӗччен тесе?)

Кам каларӗ эп пӗччен тесе? —
Çил çинче çӳретӗп ӗрчесе:

Куçӑм асӑрханӑ-пӗр тӗсе
Валеçетӗп пӗтӗм кӗтесе.

Хӗл тарсассӑн çилӗ пуçтарса
Хӗвеле сӑнатӑп куç чарса.

Вӑл çума мӗлкем пулса анать —
ӑнать! —

Кам каларӗ эп пӗччен тесе...

*1998*

* * *

Тӳс, тусӑм, тӳсӗм пӗтиччен!
Ав хурт — тӳсет,
тӳсет те — пурҫӑнӳтленет:
шума ҫуралнӑ тенӗскер,
лӗпӗшленсе вӗҫсе ҫӳрет.

*2000*

* * *

Эп хӑйӑ чӗртрӗм хӗвеле курма:
вӗт ҫулҫӑсем ҫурмарӗ вӗрене —
ӗненеймерӗ вӗт хӗвелӗме.

Хӗвел ҫӳлтен пӗлет ҫӳп мӑнӑшне:
(тӗшрен ҫуралнӑ ҫу тӗсне
кӑҫал та тӗшмӗртрӗ ӗшне!)

Анас чухне анчах ӑнтан каять:
тӗм ӳснӗҫем пӗчӗкленет пек-и —
ун вырӑнне ӳсме пуҫлать мӗлки...

*2001*

* * *

Темпе тем лекет:
сас пулать:
вӗҫлеке ҫине
тирӗнсе юлать.

Пырӑттӑм, савни,
пырӑттӑмччӗ те:
(кайӑк пырӗнче
пӑрччӗ — ирӗлчӗ!)

Пырӑттӑм, савни,
пырӑттӑмччӗ те:

(ҫӗмӗрт сиввинче
ҫӗмӗрт ӗлкӗрчӗ!)

Пырӑттӑм, савни,
пырӑттӑмччӗ те:

(кунӑм сассинче —
каҫӑм ӗмӗчӗ!)

Пулӑттӑм, савни,
пурӑнӑттӑмччӗ —

ик куҫ (т)ӗнчи витӗр
ҫуклӑх курӑнчӗ...

*1997*

ч-42099
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

* * *

Ĕмĕр килсен
тур каçарми кăра
карса ан хурăрах
кантăкăра —

[ĕмĕлкеленнĕ
кантăра
тĕттĕм-çутта
пурантарать

кайран —
тарать...

тарин —
тăраннă
мăй таран...

(тăраннă
кантăра
пурантара-
пурантара)]

Ĕмĕр килсен
тур каçарми кăра
ыр мĕлкесемшĕн
сирĕр
каррăра.

*1997*

* * *

Ман каҫӑ пур,
Ман алӑк пур,
Каҫалӑк пур...

Каҫ.

Каҫӑ —
каҫса килме
(килми каҫма ман каҫӑ!)
кам асилсе калаҫрӗ паҫӑр
кимме?..

*1997*

* * *

Эс ҫывӑхри пӗр ҫӑлтӑра
Хӗвелӗм тетӗн —
Вӑл ҫутӑ ҫывӑх пулнӑран кӑна.
Эп инҫетре санран —
Эп пӗчӗк пек — шар ҫулӑм:
Куҫна шартарасран инҫетлӗхре
ҫӳреп.

*2001*

## Саспа тата сассăр хам тĕллĕн калаçни

тин çеç:
хĕлле те çуккă пек, анчах...
(хĕвел те çук...)

чух!-(ах!)

тин çеç:
тĕнче —
сар варрине
кăларнă çăмарта
(варри —
ман çăварта!)

...(те аннă,
те тухман) —

хĕвел те кайнă...

(ăрăслисем çине
пăхма)

ухмах...

(эп ăрăс мар,
эп ăнсăртлăх кĕтем —

Тен!..)

*1996*

* * *

Çутă —
çатăр
çĕмĕрĕлсе —
çиçĕм пулса çиçет:
(çуккиçĕм!
кĕçĕр
канăç çукки!):

... çитти
çӳçенчĕк
çулçă
виçĕ
çупкам
иçĕм...

*1995*

* * *

Унта-и,
кунта-и —
пурпĕр тĕл пулăпăр.

Пурпĕр тĕл пулăпăр,
(сассăр): йăл кулăпăр —
улăпăр...

Пăр! —
куçăмăртан.
Кăкăрăмăрта —
шă-рр-ăх!

Тăрăх
мар,
урлă сикетĕп.

Вут леш енне —
Витĕр сикетĕп!

Вилĕм сехечĕ —
пĕртен-пĕр самант.

Ытти —
сана.

*1995*

* * *

Умрах эс — çук... (Хăрушă пек
пĕр хушă).
Куç харшисем — тӳлек — куçпа
тату пуласшăн.
Пуш-пушă пӳлĕмре пушшех
пуш-пушă.
Ӳтсем — чунсем кайсан — çапла
тăрса юлаççĕ.

Сисмесĕрех — сĕм сассăрлăх
тĕсевĕ:
Ыранĕ те ĕнерĕ: ирĕ, кунĕ,
каçĕ...
(тĕссем тĕссĕрлĕхпе
пĕрлешнĕ евĕр
сассем пуçтарăнаççĕ те
пĕр сас пулаççĕ).

Пин-пин сасра — асрах! —
пĕр сас çеç асăрханчăк:
куç куççульленчĕ те
куççулĕ юхса анчĕ.

*1995*

* * *

Сӑмахӑма —
сӑмах,
сума сума.
Кӗлӗ тума —
хӑма...
Хама-хамах.
(Ху ма
шута
хуман).

Сивве, сивве!
Сивве —
кӗвве...

Хӗлле...
Хӗвет, хӗвет...
Хӗвел — ӗнтӗркесе —
киле кӗрет.

*1994*

* * *

Хӑҫан та пулсан пӗр-пӗр сас
калама
туту хускалайӗ те,
эп чарӑп: «...тӑнла-ха,
ку ман шартлама...»
(Сан мар! — сисӗм айӑпӗ.)

Куҫ хӑвӑлӗ пысӑкӑш маншӑн
тӗнче,
куҫ хӑмӑрӗ тарӑнӑш...
Тӳсни — тӳсменни те — ҫав хӗл,
ир ҫинче,
шуйханчӑклӑн таврӑнӗҫ.

Темме: чи-чи канӑҫсӑр
тӗлӗксенче:
Хӗвел! — хӗвел ҫаврӑнӑш!..
Куҫ хӑвӑлӗ пысӑкӑш
ҫакӑ тӗнче —
куҫ хӑмӑрӗ тарӑнӑш.

*1994*

* * *

Тапса тухнӑ курӑк мӑнӑш
Хӗвелччен пуҫтарӑннӑ асап.
Сывлӑша та ывӑҫпа ӑсап —
Йӑнӑш пурӑнатӑп, йӑнӑш, йӑнӑш...

Пихампар!
Пар мана ура йӗррилӗх ирӗк —
йӑнӑш утӑмсемсӗр пил ан пар!

*1997*

* * *

Хирте сип-симӗспе
пӗр хурӑн сӑрланать
(ҫулҫи — инҫе те —
хурӑмсӑрланать).

Хитре ҫиппе сипленнӗ ен
тата та тӗс илет...

кама-тӑр «эсӗ» тес килет!

*2000*

* * *

Янкăр çутă кун.
Янкăр çутă тӳпе.
Çăлтăр ӳкрĕ — курмарĕç те...
(Маншăн Хĕвел ятлăччĕ вăл).

*2007*

* * *

Пас тытнă кун!
«Ах!» тесшĕнччĕ — launchиментĕм.
«Ха!» терĕ шухă çил...

*2007*

* * *

Инçе-и, çывăх-и,
Кĕр-и, çур-и —
Килместĕн, савмастăн:
Хĕлле.

Инçе-и, çывăх-и,
Хĕл-и, çу-и —
Килет те савать
Хĕвел!

*2008*

* * *

Путма çук — ăшăх!
Хутма çук — ăшă!
Пăс та пас,
пăс та пас...
Çак тĕтрере,
Тупа Тӳпе,
сире епле тупас?..

*2007*

* * *

Çӳле вĕçес — лутра,
Çĕре ӳкес — утрав...
Вутра çунать çунат.
Çăлкуçĕ те çунать!
Куçа куçать çути,
Юнра юлать тути...

*2007*

* * *

Мӗнпур пек терт каҫчен тесе шутлатри?
Хӑрушраххи — кӑра каҫсен хурри:
Лӑскать ӑна хури, туллать — шалтлатрӗ! —
ҫил-тӑвӑл пек пулса урать юри...

Тӳсеймӗ кун — каҫ ҫӑлтӑр: асаплантӑр
ала пек шӑтӑк пуҫ ҫинчи тӳпи —
йӗпи-сапи! Тӗнчи те хӑлтӑр-халтӑр
(Юн кӑларма тиресшӗн йӗп — йӗпе!)

Пурах-и ун турри? Манни ма ырнӑ?
Ут евӗр тӑтӑм тӗлӗк тӗлленсе:
Ыран сана мӗнле саспа эп ырлӑп?
(Ман чун-ҫке, чун пуш вырӑн тенинче!)

Тӳсеймӗ чун — асап хӑй асаплантӑр.
Тӑрам ут евӗр ырлӑх тӗлленсе.
Хӗвел те тухӑҫ вырӑнне манман-тӑр:
Ире ҫутатрӗ йӗп пек кӗленче.

*2008*

* * *

Асаматлă куну —
Асам ут пек — каçсемшĕн.
Аса ма — лăп кану?
Ма ăса — чăнлăх?
Темшĕн.

Мĕн тесе тинкерес?
(ăнланмастăн тăк — уссăр...)
Çу вилли-им, кĕр, эс? —
Хĕресленчĕк çулусăр:

ни мала, ни калла...
Суллану — сехетсемшĕн:
Çутталла (çуккалла)
çитерес пек силленчĕç...

Мĕн тесе шуйăхам?
Алăку (тав!) çăрусăр —
Килекен-каякан
Çав-çавах тавçăрусăр...

Мĕн тесе амантан?
(Чунсăрри ма амантăр?)

Анваскат Саманта —
вăл сана ан васкаттăр.

*2008*

* * *

Те ҫулсем хӑвӑл пек,
Те ҫынсем тӑвӑл хурӑм —
Унка лекнӗ ҫӳп эп,
ӑсӑм пур та — кӗлтурӑм:

Куҫ куран тӗрекне,
Куҫ курман тӳпине те —
ӑспа чун пӗрлӗхне —
Пуҫ тайса ӳпӗнетӗп.

Шур тӗсри ҫутӑ ку:
Шартарин — уйӑрайӑп.
«Сан ҫыртас татӑку
юррӑн», — терӗ сар кайӑк.

Чун тулли юрату
(Чун — тӗнче шӑнӑҫмалӑх):
Юрламан юрӑ ку.
Юрлӑп — йӑлт ӑнӑҫмалӑх!

Пур ҫӗрте те тӳпе —
Тӳперен пытанаймӑп.
Эс — тӗрекӗм: чипер!
Ыттисем — тӑйлӑк-тайлӑк...

Те ҫулсем тӑвӑл пек,
Те ҫынсем хӑвӑл хурӑм...

*2008*

* * *

И уйăрчĕç пире! Çулсем те уйăрчĕç:
Эс анăçа кайрăн, эп — тухăçа...
Юрать çут тĕнчере кил тени пур.

И уйăрчĕç пире! Çынсем те уйăрчĕç:
Эс хĕвел пек терĕç, эп — уйăх пек...
Юрать çут тĕнчере пил тени пур.

*2008*

* * *

Суккăр теччĕр тĕттĕм каç —
Кам ĕнентĕр?
Суккăр! Çуккă! Шарламасть! —
Кун ĕнерчĕ

куççăр курмăш пулнине:
йăлт итлерĕм.
Çĕртине те çӳлтине
евитлерĕ.

Йăлт итлерĕм итлеме —
йăлт илтмерĕм:
Уйрăм Çутă этеме
сиплĕ терĕм.

*2008*

* * *

Те пулнă, те пулман,
Те пулĕ, те пулаймĕ —
Ăна-кăна калаймăп:
Мĕн пур пекки — Самант.

Иртен каç турĕ кун —
Вăл вашт иртет ют маррăн,
Ывçа илсе тытмарăм,
Анчах вăл — ирĕкӳ!..

Самант! Савам сана,
Саманасенĕн Амăш!
Пуç ватмăшсен пуçламăш,
Сирсе кăтарт сăнна!

...Иртен каç турĕ... Чим:
Санран мĕн турĕ ĕмĕр?!
Тин пушали пуç çĕмĕр:
Ачаччĕ эс — мучи...

*2008*

* * *

Шурăмпуç пек шурĕ вăхăт —
Шуй пек шурĕ ту çине —
Юр пек çурĕ пуç çине —
Эс васка! Ăна ан пăхăн!

Чав нӳхреп çăлран та тарăн!
Кас вăрман — çурт керменле!
Сан **таçта** ёлкĕрмелле!
Чулланса тĕпрен — ан чарăн!

Шурăмпуç çути мĕнлеччĕ...
Сур-ха! Ашкăн! Хыпалан!
Хапсăн! Савăн хупалан!
Чим, **ăçта** ёлкĕрмеллеччĕ?..

Чаврăн-чаврăн, турăн-турăн —
Ёлкĕртĕн!
Çунать çурту...
Янтă ёмĕрлĕх çурту...
Нӳхрепӳ те хатĕр... Пурăн!..

*2008*

* * *

Мӗншӗн куҫ пӑвать тӗнчемӗр:
Ырӑ Турӑ, юр ма шурӑ?
Йӑлтӑр-йӑлтӑр! Хӑйӑр хурӑм...
Чунӑр — ҫук! — шарса йӗнчемӗ.

Чун куҫне мӗнпе шартарӑн?
Кунти мар вӑл — юн тымарӗн
ҫаврине лексе хунарӗ.
Ҫулӗ уйрӑм: килӗ — кайӗ...

Эпӗр пурте — хӑйӑр хурӑм.
Эпӗр пурте ҫутӑ-ҫутӑ!
Туррӑн али — ҫӑтӑ-ҫӑтӑ:
Юлчӗ — ылтӑн, юхрӗ — пурӑ...

*2008*

* * *

Эс — хӗрес.
Мӗншӗн пӗлмӗше перес:
Ҫылӑхӑм та, ҫӳллӗшӗм те — эс.
Тӗрӗсси —...
(Пӗр сӑмахшӑн пурӑнатӑп терӗҫ-и?)
Тӗсси!
Эс — хӗрес:
Тват енне ҫул кӑтартанҫӑ — эс...

*2005*

* * *

Кам вӑрӑ мар?
Эп — вӑрӑран та вӑрӑ:
эп — куҫ вӑрри,
эп — каҫ вӑрри,
куҫна уҫсан
куҫна вӑрлап,
куҫна хупсан
каҫна вӑрлап:
куҫваррисен вӑрри,
каҫваррисен вӑрри...

Ҫук, вӑрӑ мар, эп шӑпана кӑна:
вӑрларӑм хамӑн шӑпана кӑна.

*1998*

* * *

Хурçă хĕрарăм эп, хурçă аппа,
Хурлăх енне — пăр çĕмрен карапла.
Курнă, куратăп хĕн витĕр
çутă — вут кайăк йăви-тĕр.

«Тирĕç пире çил-тăман йĕпписем», —
терĕç çĕлен пек çĕлен çипписем.
Хирĕç утасчĕ-ха, хирĕç:
Ĕçĕм вĕçне çитме тивĕç.

«Ывлăм» темелĕх упранă сас пур,
«Хĕрĕм» темелĕх усранă сас пур...
Çип — çĕлен пек вĕренлесшĕн,
Йĕп — пăтаран вĕренесшĕн.

...Сывлăм пĕрчи пек чĕр кунĕ!
Савнăç та сывлăш пек йӳнĕ.
Кутăн та пуçăн çанталăк асать.
Хирĕç утатăп эп. Майлă ансат.

*2006*



* * *

*Халăхăм пуласлăхне*

çур çĕр,
куç ўкесрен
пĕр курăк çеçке çурчĕ,
тав турĕ уйăх çутине
йăхне ĕрчетнĕшĕн

уй,
вăрттăнлăх пур ман:
çав çеçкене çурма
çўреп
сар уйăх çути пек:

(эп — çур çĕр варринчи хĕвел)

*2000*

* * *

Тĕнче тусанĕсĕр тасалăх —
Эс шурă-и? Эс тĕссĕр-и?
Сана курать-тĕр куçсăрри —
Куç хупнипех пĕлеймĕ алă —

Çукки курать-тĕр çуккине:
Вăл урăх енĕн иккенне
пĕлетĕп — ним юлман енне
утатăп ним те çук енне... —
эсир курман пурри енне!

*2001*

* * *

Хам тавра вăр-р çаврăнаттăм —
пур тĕнче йĕри-тавра!
Мĕн йĕрри тăвать пĕр атом?
(пĕр тусан та — Çĕр, ара!)
Тĕнчене сырать те аттăм
йĕр туса яра парать!

*2001*

* * *

Çил пĕлĕте сÿсе ÿкерчĕ —
маччасăр юлчĕ ку Хула —
КУÇ йăлт сисет çакна пула:
(тĕнче вырнаçăннă ÿкерчĕк!)

*2001*

* * *

Чăлăм куç хупмарĕç ку енче —
лĕпĕшсем — çеçке çунаттинченччĕ —
те çеçки вĕçет ир кÿлĕмччен...
шăпăр-шăпăр тăкăнать чиен (чĕн...)
Халиччен тÿссе те чĕнменни.

Мĕн ыйтасшăн пулчĕç, илтрĕн-и?
(ÿкнĕ чух çеç сасăллă çырла!)
— шăпăрт-шăпăрт терĕç, ан шарла!
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
ир кăштах пĕлес пек çырлалла:
ирĕк — тирĕк: ÿкрĕ — çурмалла:
ванчăкĕсерен юнлать алла.

*1998*

* * *

Эп — ту мар та — урăхла ÿсеп
(тымарсен — хăйсен вăрманĕсем!)
пурнăçран вăраннăçем
тĕттĕм парăнтарнă-пĕр тĕсе
урăхла тÿсеп.

Эп тĕмен те урăхла темен.
Çиçĕм çиçрĕ — (пур са-ман-ту мар-и
çиçĕ харăс иртнĕлĕх кăварĕн
каяс умĕн?) — калаçса тăмарĕ...
çиçĕм — мĕн тымарĕ?

*2000*

* * *

Çак самантри илемшĕн-шим
ку лам?
:кулам пекки туса тăрать
турат çинчен ÿкес тумлам...

*2000*

* * *

Кун куҫне хупать те — тĕттĕм,
эпĕ уҫҫипех юлап.
Тӳнтерте — тӳнтер хăт тет-и?—
ҫуттăн тĕлĕкне курап.

Ҫуккине курма пĕлетĕп —
(ҫук теме ансат) сана
«эпĕ ҫук» тесессĕн — эпĕ
куҫ хупса хама сăнап.

*2001*

* * *

Йăлт!..—
ҫутă ку:
йăлт витĕр курăнать,
йăлт витĕр кăтартать,
курать йăлт витĕр.

Хăва кăна пул, ҫук, туна —
ҫут эс те хăвăн ҫуттуна!

Йăлт витĕр кур,
йăлт витĕр курăн,
кăтарт ху витĕр
йăлт!

*2000*

* * *

Çăлтăр
тĕпренет пуль —
юр çăвать:
çăл-тăр
юр шывĕнчен пулса юхаканни:
эп çĕрсерен ун тĕпĕнче
куратăп куç пек
çăлтăр:
çăл-куç-
ланни
пире
çăлтăрланмашкăн
çăлтăр.

*2000*

* * *

Ылтăнĕ мар мана — çутиччĕ!
Çутатайсан — хам ун пĕрчиччĕ.

*2000*

* * *

Çуха пыра пăвать.
Çу-ха, çумăр, çу!
Мĕн — çураçу? —
кала кил-çуртсăр тăлпăва.

(Туймасть çуха-
тăва
тăва евĕрлекен тĕве:
ăна ав евĕрлет пĕве —
пĕвне авать...)

«Кама савать
çавра тĕнче —
çавна калать пулмасăр...»

Хĕвел анать
çак çумăра
курса тăрса — туймасăр...

*2000*

* * *

Йыт пырши —
пăру çисе каясшĕ пыршă çеç-çке:
каяшĕ — пурçăн çеçке!

*2000*

* * *

Хĕлле «юманлăх эпĕ» терĕ пĕр юпалăх,
Çулла... аптрарĕ те каларĕ:
«эпĕр — палăк».

*2001*

* * *

Çав çăлтăр куçăмран пăхать:
ун куçĕн тĕпĕнче —
эпех, эппин...

*2001*

* * *

Эй, зебра, йăрă ăйăрăм,
ман пурнăç — сан тирӳ пек —
йăрăм-йăрăм —
йĕр çухатма хама сĕрмерĕм
хăрăм.

*2000*

* * *

Шыв-шур
нăрри —
шур
хĕрринче,

шур
тутăрли —
ту тăрринче.

Эп хам та ту:
тавралăхăм —
ман тĕсленсе —
пуласшăн пек тату.

*2000*

* * *

Ыран манра мĕн пуласси
малтан таçта пулса иртет:
сивĕтессе суран сурни пек —
чун сисет:
çапла хăш курăксем
аслатие туяççĕ:
туяланса тăраççĕ.

*2000*

* * *

Хăш хушăкран пăхсассăн та — çавах:
тĕмсем, темсем те этемсем
(чĕнсенччĕ чĕмсĕр мĕлкесем!) —
чĕнекенни те — шухăшлă çава.

Куç, ахăртнех, курасшăн чăн-чăнне:
чансем, чĕнсем, чинсем, чунсем...
тумсем, тăмсем, тĕмсем, темсем...
Хам куçпалах пăхать пек ман çине! —

(Хăш хушăкран пăхсассăн та — чĕнет) —
пурнăç.

*1997*

* * *

Кĕре никам кĕтмен çĕрте
Хăмла ăнтарнă пĕр шерте...
*2000*

* * *

Тĕнче курас килниччĕ ку —
куҫа уҫап — сĕм суккăр!

Сассем илтес килниччĕ ку —
анчах... те сывлăш ҫуккă?

Ку туйăм — кăшкăрас килни!
(сасли ăнланмĕ ку мĕнне) —

пач чуххăм кĕтĕм сан килне
шалти тĕнчен тĕлне пĕлме.

*2001*

* * *

Тек ыран пулмасть пек — ырă:
пăрлă сăлпăран урать...
Ме сана чĕп-чĕрĕ вырăн! —
куҫăма кĕрсе ырат.

Хамăн кун та тĕрлĕ енлĕ:
тӳпене пăхса кул-(ни-
ҫта-кайса-кĕме-пĕлменлĕх!) —
пăр куҫне кĕрсе курни...

*1997*

* * *

Пĕтĕмпе:
пĕр чĕрĕ вырăн пек —
тӳпе:
унта эс туртăнатăн
питӳпе —

(куç çеç
куçать) —

куç-уçлăх
куçăма
куçлать...

*1999*

* * *

Ăна тӳпе йӑтса çӳрет
(вăл — вĕçен кайăк)
этем хăйне кӳрентерсен
çĕр çумĕнчи хĕвĕшӳрен
вĕçсе каять те чи çӳле —
çӳлтен пăхать:
«çав çӳп пек пĕчĕкçĕ пӳре
мĕн чухлĕ айăп!»

*2000*

* * *

Тӳпе!
Тупа пур ман:
çăла сурман,
шăла шартса шăлан çимен,
çӳлтен ӳкмен,
çӳле сикмен
(вĕçме килмен!) —
пӳкле вилмен:

шăрт май шăлатăп шăпана.
Шăп ана.
Тӳпе ăна —
хуппи пек —
шăп кăна.

Анчах... сăна —
(пăхма хăрамалла сăнна!) —
пуçу çине ӳкет ту пек —
тӳпе.

*2004*

* * *

Ӳт-пĕвĕм — пĕлĕт хăйминчен,
Куç тарăнăшĕ — тинĕс:
Хумсем чула та тирĕç —
Ан тĕлĕн йĕп те вăйлинчен,

Ан тĕлĕн çип те вăйлинчен —
Тăва аркатĕ çумăр
(Епле чăтайĕ чунăр:
Чунсем те — çумăр тĕнчинчен).

Чунсем те — хумăр тĕнчинчен
(Чуна унран çĕленĕ!)
Кам тӳпене çилленĕ
Шăп çурçĕр-кăнтăр тĕлĕнче?

Шăп çурçĕр-кăнтăр тĕлĕнче
Шăп пул та... сассăр асăн.
Самант пăхать хăрассăн:
Эп — çип-çинçе, эп — йĕп çинче.

Эп — йĕп çинче, эп — çип çинче,
Эп мĕн пурришĕн — çĕвĕ.
Ыран тата мĕн çăвĕ? —
Çĕввӳ кайминччĕ, çут тĕнче!

*2005*

* * *

Улшăнанçи пулать те уйăх —
Каллех тулса çавраланать:
Çав ёмĕрех — пуçра — çав хуйăх:
Паян ăнман — ыран ăнать!

Таçта шăтса ӳсни (çи! тейĕн:
çеçке марах халь тин — улма),
Хум юххипе ăçта çитейĕн?..
— Мăн тинĕс йывăçĕ пулма!

Асри ӳкерчĕк е пуласлăх,
Е çак самант — ик куç тулли:
Эп хамшăн хам тĕнче пек аслă
(Тĕнчишĕн хамăр — йăт кулли...)

Пăтрав килсе пăтрантарать-и,
Утрав шырать-и пан улми... —
Пит ан хĕрхен: этем ăрачĕ
Пĕтсех пĕтмен-ха ним юлми.

*2006*

* * *

*Мăшăрăма*

Кун çутинчен писсе çÿреп-и —
Хĕн курăп çăлтăр хĕмĕнче.
Эс пăхнипех кĕлленнĕ эпĕ —
Хĕлхем шыран кĕл хĕвĕнче.

Чăл-пар саланнă пĕтĕм тĕлĕк —
Арканнă эс пăхмассерен.
(Çĕрле ун ванчăкĕччĕ — пĕлĕт,
Ар каннă аркăмччĕ — çерем).

Эп — тĕссĕр, сассăр, ассăр, уссăр
Кĕре кĕреп, хĕле кĕреп...
Мĕнех тума пĕлейĕп хусăр? —
Тумла хевтисĕр шÿкĕр* эп,

эс пăхнипех кивелнĕ тĕкĕр —
Тĕкĕрмарланнă кĕленче,
Кĕл кайăк эп (вут кайăк тĕкĕ —
çунса ĕшеннĕ кĕлĕнчен...)

Ыр турăсем чуптунă ывлăм!
Ăрша чуппи пек хĕр пĕрчи!
Эсир, эсир — вут куçлă сывлăм,
Пин тĕс вăййиллĕ хĕл ĕнчи.

Тиверт юра — юна тивертĕн,
Хĕле-кĕле-хĕве вирт яр!

---

* Шÿкĕр — тумла пăрĕ.

Çурхи тумла — вăйланнă тертĕм:
Чула шăтартăр-ха — терт мар.

Çунтар юра — юна çунтарăн:
Çунтарăн сывлăш çук çĕрте!..
...Эс тӳннĕ ту пӳне чун парăн,
Хĕвел — пăхса! — çĕре чĕртет:

Хĕвел эс! — сывлăшсăр çунатăн,
çунтараятăн тăк енчен...
кун çутинчен тивет çунатăм —
шар курăп каç пушарĕнче.

*2006*

* * *

Сас палли çырмассерен
сас килсе тăрать:
çырнăçемĕн Тем сирен:
Чăнлăх — Турăра:

Çырни мар ку — вулани:
Харăс (перекет!):
Турă, тек куçна ан ил:
эп те илмĕп тек:

Чи шалти çутта çутам:
(Ăраскалăма):
Чăнлăх вăрринчи Шута
Харăс калама.

*2008*

* * *

Чи кирлĕ сăввăма эп
хут ҫине ҫырмастăп —
Тӳсеймĕ хĕнлĕ хут, юн пек
варлатĕ паста:
Сăмахăм хĕм чĕре кăварĕнчен —
Тивсе илмен хут ҫукка-ха тĕнчен.

Чи хирлĕ сăввăма эп ҫул ҫине
ҫыратăп
(Ырра хăратĕ ҫил, кĕре хĕлле ҫаратĕ) —
Иртен-ҫӳрен пушмакĕ тĕпĕнче
Тăмха пулса саланĕ вăл инҫе.

Чи вирлĕ сăввăма эп шыв ҫине
ҫырасшăн —
Ҫӳл тӳпене ҫитсе ҫĕре ӳкес хавасшăн.

*2009*

* * *

**1**

Хăйăр купи ачисемччĕ эпир.
Сар тĕнчери çĕршывсемĕр черчен —
Сар хăйăрпа хĕвелтенччĕ: кĕрччен...

**2**

Турă пек тўрĕ çынсемччĕ эпир.
Ўсрĕ тĕнче: çĕршывсемĕр ĕлккен —
Сар ылтăнпа куççультенччĕ иккен.

**3**

Ĕмĕрлĕхри ватăсемччĕ эпир.
Çаврăнтăм пăхрăм: пĕтми тенĕскер,
Ылтăн тĕнчеçĕмĕр — сар тĕмеске:

вĕççĕр пуш хир ачисемччĕ эпир...

*2006*

* * *

Тĕнче-им эп — ман ăшăмра вилме?
Вăл çăлтăр-им: вĕçесшĕнччĕ те — сÿнĕ...
Ак сывлăш, çăкăр, шыв... хĕрарăм — ме!
Хальччен сĕнни çителĕксĕр те йÿнĕ.

Сÿнсен те тĕтĕм пулăп-ха тетни?
Эх, паттăрăм, вутпа вут çеç калаçĕ.
Асра кăна — утсем тĕпĕртетни,
Юнра кăна — ялтра çĕршыв мăнаçĕ.

Эп тинĕс-им? (Çулсем те çулăмран!)
Пĕр чарăнми эрне çумалăх çумăр
Çăтса каять те пĕлĕт чунăмран —
Тип куçăмран тивсе манпа тан çунăр,

килсе кĕлленĕр Ваттисен чÿкне!
Кĕрхи уйсем — чун çÿллĕшĕ канмалăх...
... Варти ача пек — пур, пулас чухне —
Ман ăшăмра вилесшĕн-и ман халăх?!.

*2006*

* * *

Туслă-и вĕсем çаплах, туслă та мар-и —
Ырăпа, пĕлетĕн эс, кам юнашарри.
Улшăнса юрлаççĕ-и, харăс-и юрри —
Пурпĕр темшĕн хăрушрах çур çĕрсен
варри.

Туслă-и вĕсем паян, туслă та мар-и,
Ырăпа Усал ялан — пĕр тĕнчен çурри.
... Уйăх та çурри кăна, леш çурри —
хури.
Эп хĕвел пулса çутам хурине юри.

*2000*

* * *

Те пăсланса пĕтесшĕн çут тĕнче —
Тĕтре-тĕтре-тĕтре халь ку енче...

*2003*

* * *

Чечек варринчи пыл хурчĕ
Тĕнче варринче мĕн курчĕ?..

*2006*

* * *

Яланлăха! тесе ĕнен те
Парăн — тивĕçе:
Ĕçе: киленĕçе...
Вĕçе:
хăçан-тăр ывăнăн вĕçе-вĕçе.

*2006*

* * *

Чул чĕмсĕрлĕхĕнче çак кĕлĕ,
Çул тĕлсĕрлĕхĕнче çак кĕлĕ,
Чун чĕлĕхĕсенче çак кĕлĕ:
«Çун!»

Кĕлĕ пуртан чĕрĕ çак чул,
Кĕлĕ пуртан чĕрĕ çак çул,
Кĕлĕ пуртан чĕрĕ çак чун —
Çун!

*2008*

* * *

Мĕнле кăна халăх пулчĕ ку:
Виç хĕвелпе ялтăртатрĕ Кун!
Пĕрремĕшне Турă терĕçĕ,
Иккĕмĕшне Ырă терĕçĕ,
Виççĕмĕш хĕвелĕ — Юрату.
Куç тĕпĕнче — тарăн ырату.

Чăн чăваш, тĕнчемĕр, пулчĕ ку.
Варлайман ăна сан пылчăку.
Виç хĕвелĕ саншăн та ют мар,
Чун кăна, Чун кирлĕччĕ йăтма!
Куçунта пулсассăн ырату
Нимене пыратпăр, хыпар ту.

*2000*

* * *

Сăвăсерен — чăнлăха çывăхрах,
(Сăвăсерен вилĕме çывăхрах):
Вилĕм-им — чăнлăх?

*2006*

* * *

*Çĕнĕ ăру телеçăлтăрне*

Çĕнĕ çĕрçуллăх, çĕнĕ пинçуллăх —
Кивĕ хĕвелĕн çĕн мыскари:
Пылчăк та пыллă, çӳпĕ те çуллă...
Мĕн çыпăçуллă? — Шăплăх мар-и?

Çитмĕл те çичĕ кун сăн-сăпачĕ
Çитмĕл те çиччĕ — пĕр çул умра:
Шухăш хăвачĕ, туйăм хăлачĕ
Пĕр вĕçевре те пĕр сулăмра.

Халăх хавалĕ, халăх халалĕ,
Халăх кавалĕ — чĕремĕрте.
Пуçăннă ĕçĕн вĕçĕ ахаль-им
Тухăçлă пулчĕ мĕн ĕмĕртен?

Таврăнмĕ Вăхăт — чартăмăр эпĕр!
Акă истори — ик куç тулли:
Çамрăк ăру, санра — йăх хисепĕ,
Вăхăт хуçин асамлă туйи.

Телекерменĕм — халăхăн мулĕ,
Халăхăм пухнă ылтăн арчи:
Эс ыр курмалăх — икĕ пинçуллăх,
Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕр ачи!

*2006*

* * *

Атте тесен лаштра юман тухать ума —
Хăй лартнă йывăç пек кĕрнек аттеçĕм.
Аттесенче çемье тĕрекĕ кăна мар,
Аттесенче — малашлăхăн кĕтречĕ.

Эс тĕтĕм сӳнтермен аçун тĕп çуртĕнче,
Хĕрӳ ĕçре ял-йыш ятне çĕкленĕ.
Утас енче, атте — Сар кунлă çур тĕнче,
Çур тĕнчӳне ачусене пилленĕ.

Сан куçупа, атте, тавра сăнать мана,
Çӳлти Турра ахаль Атте темеççĕ.
Сан пилӳпе, атте, хĕвел тухса анать,
Сан пилӳпе çын пултăмăр, аттеçĕм.

Хисеплеме вĕрентрĕн асатте йăхне —
Мăнукусем сан пек ĕçчен пуласшăн.
Чунра аттемĕрсен тĕрекĕ пур чухне
Чăваш тӳпи виç хĕвелпе çунасшăн.

*2006*

* * *

Эп Улăп йăхĕнчен пил илнĕ
Вутра — хĕрме, шывра — çунма,
Çут тĕнчене савмашкăн килнĕ
Чăваш ятпа, йăваш чунпа.

Çĕр чĕлхине пĕлсен — кун тулăх,
Ĕçре куратăп пархатар.
Эй, çут çанталăк! — Çураçулăх!
Хăв кĕввӳнтен тухма ан пар.

Эппин, хĕвелĕм те ман майлă,
Сӳнес пек уйăх та — тулать!
Вутра хĕрсе шывра çунмалăх
Ман халăх вилĕмсĕр пулать.

Чăваш вăййи — тĕнче çаври-тĕр,
Хĕвеле май, уйăха май.
Пинçуллăхсен пушарĕ витĕр
Мăнаç куратăп йăхăма.

*2006*



* * *

«Хумсен хăвачĕ те — пĕрлешӳре», —
Тее-тее пĕрлешрĕҫ пĕр ҫĕре.
Темме хăватлă юханшыв та
Калла юхса кăтартаймасть сире...

* * *

Пуҫ пур чухне тӳпе те пуҫ ҫинчех,
Хĕвел те сарă, чăвашла ҫемҫе.
Аялалла пăхма кăна хăратăп:
Тăратăп имĕш пач ют ҫĕр ҫинче.

* * *

Ҫут тĕнчене тĕпчеймĕп хушăкран —
Вăл хĕсĕнсех хăй кĕрĕ хам ҫукран.
Пĕрле эпир. Эп чĕрĕ чух пĕрлеччĕ...
Кайран... Чунне чăн сăмахпа упрам.

* * *

Тĕнче тени ытла та хирĕçӳллĕ.
Лутри — лутра, çӳлли — çитме çук
çӳллĕ...
Вăтаммисем икĕпитленнĕ, Пӳлĕх,
Тĕнчи тăвата питлĕ те — мĕн пулĕ?..

* * *

Маччи те çук, урайĕ те тĕнчешĕн —
Хăпарасси çинчен этем тем тесшĕн...
Туять ача çак пурнăç кутăнне:
Пуç хĕрлĕ тинкерет ун чăн сăнне.

* * *

Миçе хĕлхем хĕвелĕн, калăр-ха.
Çĕр-пин пулин — пĕри ман пайăрка.
— Çак пайăрка самантлăх
вĕçертсессĕн
Вăл пурнăç çиппине ăнланăр-ха.

* * *

Ăçта вырнаçнă пурнăçăн Мими?
Пуласлăх вăрлăхĕ ăçта тем-и?
Вутра çунтарăр та, калатăп
кĕлленмесĕр:
Хĕвел савать пире нихçан
иккĕленмесĕр.

* * *

Тӳпе хутаççинче
пуçтарăнать пек хуйăх:
тулать-тулать-тулать те уйăх —
хухать, хухать...

* * *

Çĕрсерен эп тĕттĕм сывлăш çăтрăм,
Кунсерен сывларăм çутăпа —
Çавăнпа ик енлĕ ман шăпа:
Асапне-и, савнăçне те... чăтрăм.

* * *

Унтисем, кунтисем... Пур йĕрки,
пур чикки —
Унталла-кунталла хутлаканĕ çукки.
Ан кулян: тен, унта кунтинчен те аван.
Ма апла патшасем те калла таврăнман?

* * *

Чӳречене уçрăм — куçа хупрăм
Çăлтăрсене витĕр курăнма.
Пурнăçăма тĕрĕс пурăнма
Тĕрĕслĕх шырарăм — чăнлăх тупрăм.

* * *

Хăрасран хăрать чечек,
Шанчăкпах... шанать чечек,
Çакна пăхса тăнăçем
Вĕри юн шăнатчĕ пек...

* * *

Кĕвĕ вĕçет, кĕвĕ кĕвĕçет юрра.
Кĕлĕ вĕçет, кĕлĕ кĕвĕçет юрра.
Юрла! Уй-хирсемпе юр юррине юрла:
Кĕвĕпеле кĕлĕ пĕрле çак юрăра.

* * *

Эй, тертĕм! Вутăн мар — кĕл терчĕ,
Чи .кутăн кăмăла килтерчĕ.
Телей мĕнне пĕлетчĕ çунакан —
Халь ним те кирлĕ мар ку çунăка.

* * *

Вăрттăнлăхна ан уç, ан уç эс, Пӳлĕх —
Амаланас вăйна усал ăс пӳлĕ.
Этем тени шыранине тупсассăн
Ăна кирлех-ши тертлĕ Пурнăç шкулĕ.

* * *

Савăнмалăх çукчĕ —
Савăнтăн.
Эсĕ савăннипелен
Эпĕ савăнтăм.

* * *

Турат çинчен вĕçсе те Ырă тарчĕ —
Пыра тăп-тăрă сывлăш ыраттарчĕ.
Ват улмуççи çулçи иккен... Эс ан тив:
Кайăксемпе ун тунсăхĕ ăсанчĕ.

* * *

Тӳпери çулсем те темшĕн кукăр-макăрне
Ачаран эп асăрхарăм: çиçĕм йыхравне.
Кулач мар пире ӳстерчĕ — çуллă çăварни!
Тавăм — этемрен çын тунă чунлăх çăкăрне!

* * *

«Ăсу! Пĕвў! Куçун селемĕ!..
Чуну! Чуну — кăвар илемĕ!..»
Япшар чĕлхеллĕ яш, пĕлеймĕн:
Чун варринче — сăвар элемĕ.

* * *

Сутăнчăкки — паттăрпала. Чăнах та.
Çын çиекен те амăшлĕ çынах-тăр...
Эй, Турăçăм, пурах пулсассăн эсĕ
Тискерлĕхпе чуну епле çырлахтăр?

* * *

Кама ансат пурăнăçра, çеçкеçĕм, —
Сан илемне сутса тăрать çеçкеçĕ...
Кĕтсе илес! Кĕтсе илесчĕ çеç кĕре —
Çурхи куна каллех вут тивĕ çеçкерен!

* * *

Чат хăй! — Хунав ÿстернě шурă хурăн.
Этем тени Турăпала пěр хурăм.
Эппин, эпир те вилěмсěр-и, тен —
Чуралăха чěре чăтаймě, Турă!

* * *

Хуралăхран хăратăн-им эс, Шурă:
Шурра шанса ларса кунран каç турăм.
Куç çутипе Турра шыратăп: «Турă!..»
Чун çутинче хурав илтетěп: «Пур эп...»

* * *

Пурччě юрă куçлă ырă янаварăм.
Ахалех çут хěлěх пулса янăрарăм...
Çемě çěмěрмесěр çирěппěн юрлас тăк,
Анчăксăр юлам та — шанчăксăр
юлмастăп.

* * *

Асамат кĕперĕ ларчĕ пуç çине. Асам!
Асăмри măн кукамайăм, ан айăпласам:
Пуçăма сурпан сырманшăн куçăмран
суран,
Сыртăм чĕрене — сурпансăр пирчеймест
суран.

* * *

«Çак пурнăçăн тĕллевĕ — укçара!»
Ун йышшисен телейĕ те **-çа**ра.
**-ça, -ça** тесех хуçа пулайрăн, пĕлĕш,
Çапах лере каян ху çап-çара.

* * *

Укçа çукки — кукша мелкемес,
Шăтăк кĕсйи имĕш — çил кĕме.
Чухăн пулин чăваш, кĕввишĕнех
Кĕмĕлĕнчен çĕлет шўлкеме.

* * *

«Ахрат тĕпне ӳкмĕ çут тĕнче —
Мухтав çути — нухрат çутинче!»
Нăхтасăр çав чăваш, çутишĕнех
Тевет çине тирет çут ĕнче.

* * *

Ларас килетчĕ ман та Хуçана:
Чингисханла хăват çĕклет çана.
Анчах сăваплă халăх хĕрĕн
Ман хамшăн хам хурас-и пуçăма?!

* * *

«Чун ыратать» тени ма пулĕ ун?
Вăл вăйлă. Паттăр. Чăн Наполеон!
Усал ĕçпе те усăллă пулайăн... —
Вара тĕнчемĕре йăлт тулĕ юн.

* * *

Ластăр кăтра пуçшăн — çĕлĕк-и тӳре?
Уссăр лартса ямăп — унсăр та хивре.
Ирĕклĕ, мăнаçлă, вăй вылять пӳре!
Шел, тӳри — кĕтӳçĕ...
Халăх —
кĕтӳре...

* * *

Ăçтан эп килнĕ? Камăн вырăнне?
Мĕскер пĕлме те мĕншĕн вĕренме?..
Тăрăхласа кулать те вĕрене —
Хăрать.
Çил сапалать ун вăррине...

* * *

Пĕлетĕп эп: йăлт вăхăтлăх кăна.
Эп хам та лекнĕ ăнсăрт тыткăна.
Яланлăха ăçта ăсанăп —
Кайма пĕлсен илемлĕ-çке хăна.

* * *

Тӳперисем чуришĕн тӳпелешнĕ.
Тӳрерисем тӳпишĕн вĕткелешнĕ.
Çĕр çинчисем пăшал тытса
ĕрлешнĕ.
Çĕр айĕнче ют тымарсем
пĕрлешнĕ...

* * *

Тем пайларĕç хыттăн.
Илтĕн-и, хăта?
— Тăнлăлатмĕ ылтăн,
Тăн — ылтăнлатать.

* * *

Шуйхатрĕ тӳпене
Пĕр ушкăн хура кайăк.
Шуйханнă тӳпене
Ăçта вăл сыпса кайрĕ?

* * *

Тӳпе, кустар вут ункуна!
Ҫырла пиҫес мехел — куллен-им?
Ҫунаканни те — чун кӑна,
Ытти — пӗр тивӗ те — кӗлленӗ...

* * *

Мӗн чӗрӗ — ҫав Турӑ,
Мӗн шурӑ — таса.
Ҫӳрех пӗлӗт хурӑм
юра таптаса.

* * *

Эп — чӗре.
Чӗре канмасть:
Чӗрен чарӑнса
канма юрамасть.

* * *

Тěнче — тетте, эпир — ача:
Мěскер пурри йалт кěчě
халаçа,
Анчах та хамăр ӳснěçемěн
Мěн-ма тěнчи тарасшăн
хăраса?

* * *

Çěр çăтайми çылăхсене тӳпе çăтать.
Çěр чăтайми çылăхсене тӳпе чăтать.
Хăçанччен?
Шалчамăр туличчен.

* * *

Хам ирěкпе кěмен кěрешӳре
Ĕшентěм эп хěçпе çӳре-çӳре.
Хěç шăратса ěç хатěрě тăватăп —
Ĕçлекене тиркемě-ха Тӳре.

* * *

Камăн ÿсес килет — çав ынатлă.
Камăн вĕçес килет — çав çунатлă.
Камăн çунас килет — çав кăвайтлă.
Камăн хунас килет — çав хăватлă.

* * *

Эс, ачалăх, асрах.
Эй, патшасăр патшалăх!
Чăн марри куласран
Чĕн, уçах-ха пахчалăк...

* * *

Эп сăхланман кевер* чула.
Пурах, анне, парнÿн пил ипĕ** —
Уçатăп хам утас çула
Умра шур пир сÿтсе пыни пек.

---

* Кевер — бриллиант.
** Ип — усă.

* * *

Тăкса янă шыв пек — тĕлсĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр çул шырап.
Хам хама калатăп: тĕмсĕл,
Йыхăр ху пек çулсăра!

* * *

Çынлăх та çылăх... Чикĕ —
Пĕлĕт пĕлмелĕх шикĕм.
Шик! шăхăрасшăн Усал —
Çынлăх суйла та тасал!

* * *

Иртнĕ ĕмĕр ĕмĕчĕ — паянхи кун,
Паянхи кун ĕмĕчĕ — килес ĕмĕр.
Ĕмĕтлентĕмĕр те ĕмĕтлентĕмĕр...
Килес ĕмĕрсемшĕн
сахал мар-ши ку?

* * *

Юплĕ-юплĕ çул-тăр — юпленсе çӳреп,
Пилĕк юплĕ çăлтăр кĕçĕр эп.
Иккĕлененĕпин те виççĕлененĕпин —
Тĕрĕс шухăш тупăпах эппин.

* * *

Йăлт суя халь, кутăнла...
Шак хурам юлташшăн:
Мĕншĕн шăтăк ку тумлам?
Тен, шăрçа пуласшăн?

* * *

Çумăр канлĕн çул çăрать.
Кун вылянчăк питлĕ.
Вĕлтĕрт! ӳкнĕ çулçăра
Кĕмсĕрт! сасă илтрĕм...

* * *

Ĕнтĕ çырма юхать, çырма юхать —
Çыранĕнчен юхăм тарать,
Çырми юхтăр, çыр ма юхать? —
Юхан çырми юхăнтарать.

* * *

Пĕве кайса тымарлăлантăм —
Тĕп-кăкăм çул пулса чăлханчĕ:
Кăкаркăçпа çуралнăскер —
Шалча кантри пĕрех кĕске.

* * *

Тĕнче касса тĕнче хĕрри шырарăм —
Хир хĕрринче кĕтсе тăрать хĕрарăм:
Тĕнче варри, тĕнче хĕрри —
тăван аннӳ,
Ун варĕнче — тĕнче касса çӳрет! —
ану.

* * *

Мĕнех çул вĕçĕнчи тупра? —
Ху Килнĕ Çул сумне упра:
Этемлĕхе те, çынлăха та
Пĕтессинчен çав Çул упрать.

* * *

Шухăшсăррин анчах пачах çук терчĕ —
Ав тан мартан автан чунне сых кĕчĕ...
Чан вăхăтне сисен ăшри сехечĕ
Çĕр варринче хăйне шартах сиктерчĕ.

* * *

Сисчӳ мĕнне пĕлменччĕ: çамрăк!
Çĕмрен-шану халь — çĕмрĕк-çамрăк:
...Çĕлен çиппи-и çав, çĕлен-и?
Е çĕленне çиппе çĕленĕ?..

* * *

Пыл хурчĕсен — хăйсен пыл лаçĕ:
Çўрекеннин — чĕр ăс хăвачĕ,
Çўременнин те — (шухăшлаççĕ!):
Ав хĕвел çаврăнăш — тĕш лаçĕ.

* * *

Çилле çилре пытартăм: тар!
Ан курăн — ан кăтарт!
Хăй курăнмарĕ те — кăтартрĕ,
Кайран пур кантăк витĕр тартрĕ.

* * *

Сас вĕçĕ — виçкĕтеслĕх пек: пăта!
Вĕçлекисем вĕçеççĕ ман пата:
Сăмах-им сас — (пĕлтерĕш-им!) —
юнав!
Юм терĕшĕ ларса юлать юна.

* * *

Чунри сăмах тула тухмассерен
Тумтир тавраш юлмарĕ ман çире:
Итлекенни-мĕн пулнă шĕкĕ,
Юрать-ха чун хутаçĕ йĕкĕр.

* * *

Çак шухăша хăть тăм пек йăвала,
Пĕр малалла, пĕр каялла кала,
Хăй чăнлăхне вăл пурпĕр манас çук:
Тусна ан сут! Тусна ан сут!
Тусна ан сут!

* * *

Эп туслăхран вĕрен сӳтме
вĕрентĕм...—
Çип пек тӳсме пĕчченлĕхĕм вĕрентĕ:
Туссем сутсан — пĕр уссăм çук çĕрте
Пуçа чикме хăть пулĕ йĕп çăрти.

* * *

Ахрат çырмиллĕ ахăрсаманан
Ахрăмĕсем сехрем тĕлне пĕлсессĕн,
Ахальлĕхе ача пекех манан,
Ахаль марри анчах юлатăн — эсĕ!

* * *

Нумай пулсан — вăл савăнăç та мар,
Нумай пулсассăн — вăл хĕн-хур та мар,
Çапах мĕскер вăл хуйхă-суйхă
нумайийи? —
Йăва тĕпне — чĕре тĕпне —
юлать майи.

* * *

Пур-ăнăçу — виç енлĕ:
е ăнать,
е ăнмасть,
пĕрех сана пулмасть.

* * *

Кун — кĕсье — çĕввисем çăтă-çăтă,
Кун кунлатăп та...— çутă тупатăп.
Калананпĕр сăмахăм тупа тăк —
Çăлтăр çăлтăр пире — çăлтăр çăттăр!

* * *

Шыв — чун пек — хурăмсăр — Пăла!
Ăçта лекет — çав хурăмлă пулать.
Пĕччĕнлетсе тумлат ăна! —
Чăн хурăмне тупать кăна.

* * *

Эп пурăнатăп путнă хулара,
Писсе çӳретĕп пĕтĕм пулăран.
Пулла тухма тăхтарăн, паттăр, —
Кил, сывлăша шывран тăватпăр!

* * *

Вăл — чăнлăх — уйăх евĕр туйăнать:
Кашни хăй уйĕнчен курать ăна.
Эп харăс йăлт курасшăнччĕ сăнне —
Çук, уйăх кăтартмарĕ леш енне.

* * *

Йăлт хăнăхать этем, йăлт хăнăхать,
Пĕр хăнăхсан хĕвел çине пăхать:
Вĕçет тĕнче, эпир — тĕнче çинче,
Пĕрех вĕçесшĕн çын кавир çинче.

* * *

Килес çул ыйхинче темĕскер
кăштăр-кăштăр:
Улмуççи çаннинчи пан улмин вăррисем
Пиçнĕ май тем çинчен
шухăшлаççĕ-тĕр кăштă —
Шăп тăр...

* * *

Эп — пуш хирти пĕр пĕрчĕ хăйăр,
Тавах, тĕнче! (Кулма ан хăйăр) —
Пур тӳсĕмпе пăчăртанап та хыттăн —
Пулса тăрап тусан пĕрчи пек ылтăн.

* * *

Тĕнче çутин миçе хĕлхем? —
[ăçта ӳкет мĕнпур мĕлке? —
(кам миминче мĕнпур йĕрке?)] —
Пуласчĕ ман пĕрин чĕлхи!

* * *

Ӳксессĕн — шуçăм пулса шу:
Анăç — тухтăр, тухăç — антăр!
Хăçан-тăр хĕвел — (çулташу) —
Сутасса кĕтсе ан тăр.

* * *

Ял кĕтĕвĕ — хула:
Тухса тарас килет тула —
Ялĕсерен — икĕ ял:
Тухса тараймалла мар.

* * *

Тĕнче — калпак:
Пуç çĕклемне тĕрев кӳрем алпа —
Чавсаланса ларатăп: карчăк —
Ват хĕр ача: ир кăвакарчĕ...

* * *

Кун саралать, тăван, кун сарăлать —
Ваттисенĕн çутти куçа тухать —
Хăрах куçпа — (хĕвел!) — кунта пăхать:
Çутти витĕр çукки яр! палăрать.

* * *

Кун кĕскелет, тăван, каç кĕç килет —
Çутă пулса куçа тухас килет —
Хăрах куçпа — (уйăх!) — кунта пăхас:
Çуттăм шерпетĕнче çăлтăр ухас.

* * *

Ӳкме пуçланă чул, ту чулĕ —
Вĕçме пуçланă çăлтăр çулĕ —
Тĕнче пĕччен — эп тăр пĕччен! —
Чикеленетĕп чикĕччен.

* * *

Сарă куна унка хупса анать хĕвел —
Хыр тăррисем тирни пирки манать
хĕвел...
Çыр хĕррипе — çĕр хĕррипе! —
чупатăп —
Сар кунăма унка хупса — чăматăп.



## Уйăхпа хĕвел

### 1

мĕн чухлĕ кантăк! —
мĕн чухлĕ карă!
мĕн чухлĕ алăк! —
мĕн чухлĕ алă!

сас:
пĕр атă парăп
мана паллан тăк!
(икĕ атă — пĕр мăшăр).

Хăрах: урallă —
Хăрах: хул — алă —
Хăрах: хăлхаллă —
Хура: пĕр куç...

Хурах!
тен, хам та халь
ун хăраххи?!

чĕр-куç-
çи
çи-
не...

(чĕрçитти çиле
(хурланчăк) —
чĕр-куç-
çи
çи-
не
хурать...)

çурри...

те куç хури
хăрать
те уйăх
хуйхăрать
те уйăха
кура —
çурри...

(хĕвелĕн те
çурри
тухать ыран!)
тем ыратать:

те — вупăр
çыртнă
уйăх...
ик куç
кашти —
тăманасем?

ăçта çурри,
тăманнисем?! —
вăранăр!

...хуралăх...

Пурри,
хуп а-лăк-а!
леш айккинчен
яр сăлăп!

Хуп!
Хупăр!
Хупăрсам!
Хупăрсамăр!
Хупăрсамăрччĕ...

(пыра
пырса
пăрас пек
вупăр —
чун
çуррунтан
хăранă
чух)

Хуп!

пӳне
пухса
кил
тепринче:

чӗре —
чӗрейшӗн,
чун —
чунушӑн

(пӗр пичӗ —
уйӑх та
тепри
хӗвел-и,
тен —

ҫурри!)

тӑхта...

Хуп!
санпа
хӑрушӑ
пӗр хупра!

пӗр хушӑ
карӑнас
килет
(мӗн чухлӗ кантӑк! —
мӗн чухлӗ карӑ!)

сас çурри:
карăнасси —
парăнасси пек

эп (çурăлас пек):
мĕн-ма ун пек?!

сас çурри:
майпен-майпен
çавракаланнă
сар хĕвелпе
сар уйăх

(нумай çавра
каланă
кун çинчен

(...каç çинчен...)

каçса
каяймăн
асаматăн
каççинчен...

эп (çурăлас пек):
ăмма
тавра
каян?

паян
ман
карăнас
килет!

(мĕн чухлĕ кантăк! —
мĕн чухлĕ карă!..)
сас çурри:
пӳкле-пӳкле
çӳрекен
пӳкле
тĕлне
çитеймен

(пӳкле
вилĕм
тупас пур...)

ма
ĕрчетес
тен
уйăх-хĕвеле?

эп (çурăлас пек):
ман
карăнас
килет...

сас çурри:
...вĕсем те —
хăмпă...

эп (çурăлас пек):
тĕнче те
хăмпă пек
мана...

Хăмпă
пулма
мар —
хампа
юлма —
ман
карăнас
килет
темме —
карас
килет
мĕнпур
тĕнне!

(мĕн чухлĕ кантăк!
мĕн чухлĕ карă!..)

Хуп,
ан хăра

(Хам та сисмесĕр):
хăраххăра
пăрахмăра?

сас çурри:
хăвах
пăрахмăн:

эп — сан çурри,
эс — ман çурри

(пăр пуррипе шыв пур,
шыв пуррипе пăр пур)

— хёвел-им эс?
— хёвел
— эп?
— уйăхăм ман,
хуйăхăм...

. . . . . . . . . . . . .

**2**

Пирĕн талай —
çав таран:
талан —
пакăлчак таран
(тăраканкки
сикнĕ чух
Мăнкун çилне
пулас çук.)

Пирĕн талай —
çав таран:
палан
пĕрюн манпалан
(юр — юнтарса —
урнă чух
сая каяс
хуйхăм çук.)

Пирĕн талай —
çав таран:
киле-тăран —
мăй таран

(киле-тăран
пулнă чух
пулас килмен
хуйхăм çук.)

Çичĕ тăрăх
пурçăн пур,
çичĕ тăрăх
хурçăм пур —
туянасчĕ
çичĕ хур
(ик минтерлĕх
тĕкĕ пур)

Пурри пур та
çукки çук,
мĕн çуккишĕн
çаккăм çук
(çук çакăран
çакăнма
çăтăр-çатăр
шухăш çук) —

Пирĕн талай
çав таран:
талан —
пакăлчак таран,
тăраканкки
сикнĕ чух
вĕçсе пĕтес
хуйхи çук...

### 3. Юмăç сăмахĕ

ыран:
тухсан — тухать урăх хĕвел,
уйăх суйлать урăх хĕре:
тăрăхла
кĕре кĕрӳçĕн —
йĕкелсем
(йĕкесем —
пир тăрăхлĕх)

виçĕ çĕр
выçă çӳр-
енĕ
кашкăр
пырне —
пĕр
ĕне мар,
пĕрене!
Пĕррене
иккĕ
савать,
тикĕт —
хĕр хапхисене

сăхсăх!

Пĕлĕт
пĕлет:
сан тĕлĕкне
килĕ
телей

ыйтĕ:

пыйтă
ĕмĕрĕ
кĕмĕл-и,
тимĕр-и?

чимĕр те,
имĕ пур тăк
чирĕ пур:
иртнĕ
ĕмĕр!

ыйтĕ:

йытă
мĕн
çийĕ
çитес
ĕмĕрте?

çĕмĕрт те —
йытă çĕмĕрчĕ

— çурисене?..
— чĕчĕ ĕмĕртĕ

— çын ачине
мĕн каçăхтарĕччĕ
ун чух?
— чуччу та
чух

— тухĕ-и
хĕвел
тухăçран?

— ухăçран
ыйтам-ха, те...

[ухăç
ĕçĕн
тухăçĕ —
йĕппӳ
вĕçтĕр
тухăçран:
(чĕппӳ
тухать
тухăçра —
анăçра
вĕçсе
анать!)]
тухĕ,
тейĕ
ухăç:

тухĕ
вара
хĕвелӳ —
пит çăмарти
хĕрелĕ!

...ы!-
văç тупанĕсен тупи —
вун пӳрнен хĕрӳ тупи

пĕтĕм тĕлĕкĕн туппи —
куç хупанкисен хуппи...

кăптăр-каптăр пуличчен
кăпăр-капăр пулас та
çăмăлланнă утаспа
хам енне ярса пусас

кашни хĕрĕн — хĕр йĕрри,
кашни йĕрĕн — хăй тĕрри
йĕмен хĕрĕн — нĕрĕ çук,
хăрах аттăн латти çук...

çӳçеленнĕ пӳрт арки
курнă хĕвел пайăрки —
чи кĕске турталлă кин:

пат, пат, пат...
пат, пат, пат...

вăхăта
тумла
тăнлать

е шăтман
туна
тăнлавĕ
тăпрасри
тăма
та-
пать...

**4**

кĕввĕм вĕчĕ тетĕн-и?
пĕвĕм пĕчĕк тетĕн-и?

ӳсĕпĕр:

курăк йĕпписемпе тан,
курак чĕпписемпе тан,
чĕчĕ ачисемпе тан,
кăнтăр мĕлкисемпе тан

тиркекене — тирĕк тĕп,
(«тир» текене «тирĕп» теп:
«шăрçа тирĕп çӳçерен») —
çӳçе çăлса пир тĕртĕп

пирĕ пулĕ — пирĕнле:
йĕрĕх пӳрни перĕнмен!
(пӳлĕх пӳрнĕ пулинех)
пĕр çул иртĕ, çĕрĕшĕ...
пинĕш иртсен çĕрĕ-ши?

тупăк кĕпи терĕн-им? —
шур пĕркенчĕк тĕртĕнĕ:
ука хурса ункăлăп,
ярăм-ярăм аркăлăп,
яра куна
ярапалăп,
кĕмĕл ярăп —
сапакалăп,
янкăсланăп,
яр! кулăп —

янкăр кăна
уяртсан
ярпайланăп,
сана калăп:
яри уҫăп кантăка —
уяр кайăк, евче кай!

«йăли тĕллĕн-тĕллĕн-тĕр»,—
пĕтĕм тĕнче тĕлĕнтĕр...

...кĕввĕм лĕп пек тетĕн-и?
пĕвĕм лӳппер тетĕн-и?

ӳсĕпĕр:

курăк йĕпписемпе тан,
курак чĕпписемпе тан,
чĕчĕ ачисемпе тан,
(Хавтан* ӳсмĕ манпа тан...)

тан тапнă!
тан тапнă!
шыв та ҫӳллĕ халь пăртан!

**5**

чан чĕлхи пулма пӳрменшĕн,
ҫил ҫилхи пулма пӳрменшĕн
куҫ хар-
ши!-
пе

---

* Хавтан — пĕлтĕрхи курăк.

çил çилхине уçар! —
(йĕс турапа çур уйăх-шим
хуçа?!)

хĕл варри:
хĕл — вĕри:
пăрĕ — пăри,
юрĕ — юри...
пăрçа пăрахнăн,
шăрçа пăрахнăн
пăрах! пăрах!
урлă пăрах!
тăрăх пăрах!
пăрăх тăрăх!..
. . . . . . . . . . .

АВТОР:
Шăпăрт тенĕ ялĕнче
шăпăр кĕвви калас пек,
шур шупăрлă хĕр упраç
шăпа ярса ташлас пек,
кашнин хăйĕн шăпи пек
ташă ташлас йăлинче...
. . . . . . . . . . . . . . .

...вупăр юрри мар-и ку,
вупăр йĕрри мар-и ку —
вырăн варнă варăмра?
вăрă шăл çăварăмра

шăл çĕмĕрсе кĕменне
туса хурăп шăл çемми —

хыпса çăтăп выç варла!
чăмăрла!

чан чĕлхи пулма пÿрменшĕн,
çил çилхи пулма пÿрменшĕн
куç хар-
ши!-
пе
çил çилхине уçам!
йăлă ярса çур уйăха хуçам!

...урлă пăрах!
тăрăх пăрах!
пăрça пăрахнăн!
шăрça пăрахнăн!

Турă пурах! —

Хăрах... ату?!

Хĕвел ури — çарамас...
(хĕвел хăрах аттине
уйăх çине — (ю-ра-масть!..) —
типме хунă пулинех...)

тинех!

. . . . . . . . . . . .

...пулăп (ĕлкĕр!)
хĕл хĕвелĕн
уйăх хуйăхлĕ
алки

пулăп (ёлкĕр!)
хĕл хĕвелĕ
кĕвĕленĕ
чĕм ёлки

ёлкĕр! ёлкĕр!
(ёлĕк — кĕрччĕ
халь — хĕл!)
ĕмĕлке те
пулĕ...
кĕл —

хĕл варри:
хĕл — вĕри,
пăрĕ — пăри,
юрĕ — юри...

ав çав çаври
мĕн çаври
Çавал çийĕн
çаврăнать?
тăвăл юрри
терĕр-и? —
турă кайăкĕ —
тăри:
тăр-тăри, тăр-тăри,
ирпе ирех тăтăр-и,
пăри пăтти çакрăр-и?
хĕл варрине пăхмасăр
туя туй пек тăвар-и?..

**6**

АВТОР:

Эп сирĕнпе пĕрле
палăрмалла хăрах.
Палăрмалла вăрах —
алă парса илни:

иксĕр.

Эпĕ — ирĕксĕр...
(тирĕк çăван —
тирĕксĕр).

Эпĕ хам та —
тăр пĕччен:
пĕччен
килет,
пĕччен
вилет
этем...
[(«э» тем —
«э» илтĕнет,
«ӳ» те мар,
«у» та мар),

хута мар,
ӳте
ыраттарса
çырать
калем!)]

(халь ем-
ешĕл
тĕшĕллĕ —
тĕшĕллисем...)

каçчен —
пĕччен,
ирччен —
пĕччен

эп-
пин,
тăлăх
тетĕн-и? —
(пĕлĕт
тĕтĕмĕ!)

(сĕм
тăлăхăн
çĕр си-
сĕм!)

каçăм —
ўппĕн -...
куçăм —
ўххĕн

ухă пек
мар
кĕпем çухи —
пĕкĕ пек
(ĕнсе —

ёнсе
кайнă
пек...)

вăчăра
мар
мăйра —
сăнчăр! —

(ăнма
ăнчĕ!)? —

сăн чăр-
мантарать
чăрсăр
кулма

мул мар,
лум
юратнă-
тăр
ăратăм

(тăр-тăр!.. —
тарать
тӳпе
тăрри

ах, мăнтарăн
ҫын тĕнчи!
Тутăр
уртса
тăрĕччĕ...)

**7**

ту-па-ту эпир,
ту-па-та!
тупа ту:
тупӑп те!
туп!
(те пӑр
тӑпӑртатать,
(те — вупӑр)
те тупӑлла
тапаҫҫӗ
улӑпсем...
те — тапӑр ут
те тапӑра
тапраннӑ
шур тусем)
туп:
турат
куҫне
тура
хурса
хӑварӑп
(тӗкӗлтура,
ан тӗкӗн!)
туп!
упа
тупанӗн
йӗррипе

çарран
уттарăп

ура
тĕпне
хăрта
хуртарăп
(хăрпан
куç хывтăр)

туйра
хăртса
туя
тутарăп
(тутар
куç хывтăр)

куç хăрпăкне
тăкса
хăварăп
(вăртах
куç хывтăр)

шаклам
çине
тăпка
хăварăп
(пăлхар
куç хывтăр)

тусем,
шур тутăр

тупăр
тапăрта!

...тусем çинче —
тухья:
туя тух, ял!

(те пăр
тăпăртатать,
(те — вупăр)
те — тапăр ут
те тапăра
тапраннă
шур тусем)

те чĕре таппи
те тĕнче таппи

(чикĕсерен — тупă,
чикĕсерен — тапă...)

ту-па-ту эпир,
ту-па-та!

ту! — ту-с-ăм!
ут —
тула! тула!
тула тухса каяр!

туй-çуй — кайра —
шур шупăрлă
тус(с)ем,
шур тутăрлă
тус(с)ем...

ту-па-ту эпир,
ту-па-та!
(ТУ-па-ТА?!)

...те пăр
тăпăртатать,
те — вупăр
те — тапăр ут
те тапăра
таптаççĕ
шур тусем

те уйăх —
те хĕвел!
те аслати —
те çиçĕм!

...тем: те —
тан таппи
те пепкем тяппи
те чĕре таппи
те тĕнче таппи —
КĂВАК ХУППИ! —
(сехре хăппи!
пултăр мĕн пулас пекки!)

:чикĕ
патĕнче —
икĕ ту
таппи!!!

*пуш-ака, 1997*

## Телейсĕр куççем çинчен хывнă юрă

### 1

Пĕрре
килетпĕр те пĕрерĕн,
пĕрерĕн —
каятпăрах пĕрре.
Чĕрре
кĕрсе пăхма-ха терĕн!..
...Кĕр ирĕ
пăхать чӳречерен...

Анне!
Çакна курма çуралтăм.
Тĕнчемĕр —
çуках пулас тĕнчен
тĕнни
(пулинччĕ пĕчĕк кантăк!) —
мул евĕр
юлать, юлать пиртен.

Тăмха —
çуралсанах: мĕн каслă
ман пилĕм —
ман вилĕм? — пĕр йĕтре!
Хăлха —
илтме? Ан илт! Эп — каскăн.
Ман килĕм —
пĕлмен-и? — пĕлĕтре.

Çăмхан —
вăр çавракa пулсан та! —
пур вĕçĕ.
Пуçламăш та пурах.
Тăмха...
Çын умĕнче ан салтăн...
(Мур! Кĕçĕр
пур тĕлĕк те — хура).
. . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ма куççульпе пит çу-
рăм-ха?
«Çын умĕнче ан салтăн...»
Çаралăх —
чи вăрттăн курнăçу,
чи вăрттăн пурнăçу —
тăмха...
...Сассу, сассу, усалăм!
Шур алă...
Хуралăхра — куçу...
ПУР ВĔÇĔ!
(исленчĕ-тĕр минтер).
Мур! Кĕçĕр
пур тĕлĕк те — тӳнтер.

**2**

...куçăм...куçăм...куçăм...
шĕкĕр турра!
куçăм курать
куçа.

...куçăм...

ёмĕр — мура!
куçăм куçлать
куçа.

...куçăм...

(куççăр куç çук,
çутă куçу —
кун-çул).

. . . . . . . . . .

çутă куçу —
куççуль.

...ку-ç-ăм...

уçă куçах
уçа-уçа:
хăçан?!

хыççăн! куçах
куççăр куçа,
хуçам.

. . . . . . . . . .

...шуçăм...

### 3

Пирĕн çăтмах —
хӳшĕре.
Хăшĕн-пĕрин —
кӳршĕре.
Пĕлтĕр-и?
(«Пĕлтĕр» тени пĕлтĕр пек,
кăçал килчĕ Пĕлтĕрккем.)
Пĕлтĕр-пĕлтĕр-пĕлтĕркке,
Йĕке вĕçĕ вĕлтĕркке.
Йĕксӳ юлать пырăмра,
йĕлĕ юхать куçăмран.
Ку — çумра.
Куçăмра.

### 4

Пиллесессĕн — пин пулнă,
пиллемесен — кĕл пулнă.

Ах, çырлах, турă, çырлах, пӳлĕх!
Ашапатман карчăк килĕ,
Тусан кăна тухса юлĕ,
Çав имлĕ, çав юмлĕ.
Шур лашине утланĕ,
Юпăнчăпа хупланĕ,
Шур йăттийĕ шăртланĕ.
хура куç,
шурă куç,
сарă куç,
арăм куç,

арҫын куҫ,
чакăр куҫ,
хăнчăр куҫ,
чан куҫ,
чалăрнă куҫ,
талăрнă куҫ,
ĕмĕтсĕр куҫ,
ӳкĕтсĕр куҫ,
ӳкнĕ пулсан —
тух, куҫ, тух.
Тьфу, тьфу, тьфу!

(Мĕнех пĕлем хушса ҫырма?)

Э пĕсмĕлле, турă, ҫырлах.
Туран ансан — тарăн ҫырма.
Ҫыранĕсем — чăммалăх,
Ҫырма хĕрри — ҫырлалăх,
Ҫырлалăхĕ — ҫырлаллă.
Хура пилеш хĕрелсен,
Хĕрлĕ пилеш хуралсан —
пирĕн куҫсем куҫăхчăр.

Тур упратăр пур куҫран.

**5**

Кĕтни —
ĕнтни.
Кĕтсе илни —
кӳтсе вилни...

Кайран...

Кашни ир —
ирĕксĕртен.
Ирĕк çĕртен —
вĕрен
мăйра.
(Майра
сайра
кайран!)

Çĕрĕсене —
пӳрне.
Çӳрекене —
çӳрме.

Темме —
куç çулăхать
Хĕме
(хĕм ĕмĕрех —
сӳнет).
Хĕм çук куçа
мĕнле уçам,
хуçам?
Пуçа усам...
Е:
аçам
сарам,
асса
(аса илсен —
асам!)
Салам!

Куҫа хупса
кулам!
Пуҫа усам?! —
Усал
пӑсать
туса,
ӑса
пусать.
(Курсам —
тусан
тусать!)
Куҫӑм (туйӑм) —
йӑм!
Кӗрсем сӗме,
миме.
Куҫу — ӗмме!
Хӗм иленет
хӗме.
Вӑрларӗ те
чӗме —
чӗнмест.

Тӗлӗк-и ку?
Ӗлӗк-и ку?
Пӗр ӗмӗлкӳ —
тӗлӗнмелӗх.

Чӗрем шыранӑ
меллӗх
чӗнмерӗ.
Чӗнӗ — хӗлӗх!

(Хĕлĕм!
Хĕлĕхсен
хĕлли!
Пĕрлĕхен
хĕрли!
Хĕрлисен
хурри,
хĕлĕм!)

Чĕлĕм —
чĕмсĕртереххине,
чĕчĕ ачисене —
ĕмкĕч,
чеереххисене —
чĕлĕ.
Пире —
чĕрĕ пеккисене —
чун-чĕре
чирĕ...

Куççем — йĕме.
Çук, çиçĕме —
вута-хĕме —
хĕве —
кĕме.
Сĕме
кĕме.
Унтан — йĕме.

Малтан —
хуллен —

«тӳрем!»
теме,
кайран —
куллен —
«хӳрем!»
теме.
Темме.

Куçу — мемме.
(им иенет
мĕне...)
чим, э...

«Хĕр чухне —
хĕрĕх»?
Хĕрĕх!
Хĕрĕхрех —
кĕрĕк...

Куçу — хӳме
(çула пӳлме).
Тĕрме!
(чĕрне —
йĕппе тирме).

Кĕвĕ кĕвĕлеме?
Куçсем —
сĕрме
купăс?

Куçсем —
пĕрне —
хупă.

«Куççем — эреш», тен?
Куççем — эрешмен!

Хĕлле — хĕвелленме?
Ан хăй чĕнме. —
Пӳрмен!
Куçу — кермен.
(Шĕкĕ — шĕкĕрскерĕме!)
Кĕвĕçекенĕме —
кĕве!

Куççем —...тӳме!
Куççем — сӳнме!
Куççем —
(хăрăр!) —
хăвăл...

Куççем — çиме!
Йăтă,
ме.

...Тем ачашлать теме...
Темме.

**6**

«Ăçта каян, пике, каçа хирĕç,
Ик куçăнтан куççуль юхтарса?..
тарса...»
(Сасси инçе каять ахрăмланса).

Акамăмсем!

Çавра çилсем — çиллес! —
Сывлăшăма пӳлет.
Мăйкăчсене — йӳле,
Çавра çилпе — çӳле!
Вĕçерĕнеймеллех!
Эй, пĕсмĕлле...

Çунатлисем, паян —
вĕçекенсен уяв.
Вĕçсе каяр уя
вĕçетĕрех пулсан.
Çуйланакан чĕре
çулăмсăрах çунать.
Çунат çумне — çунат.
Çӳле!
Çӳлтен курар çĕре...

Асамат кĕперĕ
айĕнчен тухар-и?
Телее тупар-и
пĕрерĕн-пĕрерĕн?

...Вĕçес килни — пĕрре,
Аса илмессерен
чĕре туртать лерех —
И, чĕмере!

Тĕлĕнмелле урам.
Килĕмелле каллех —
кĕлленнĕскерĕме.
Тĕлленнĕскерĕмех —
тĕлĕнмелле хура...

Тĕлленнĕскерĕме —
каллех тĕне кĕме,
каллех хĕме кĕме,
каллех хĕве кĕме —
каллех — кĕлет?..
Килет! Килет!
Тепре килес килет,
тепре вилес килет.

«КИЛ»
тет
КИЛ

...Çил мĕлкене силлет...

Килĕм енне — урам.
Тĕлĕнмелле хура.
Телей мĕнне курам
Тени — йĕни — харам.
Тĕлленнĕскерĕмех!
Ман вилĕм çук пекех
ман килĕм çук текех.

Куç — çук.
«Арăм та çук,
парăм та çук...»
Çук — куç...

Çӳçрен — çӳçе.
Вĕçрен — вĕçе!
Вĕçĕр!

Вара — киле,
вара...вилер
кĕçĕр.

**7**

Теес тени-и,
тен —
куççем?

Куççем —
чĕнни,

пĕ -
ччени!

Çуках пулас
тĕнчен тĕнни...

Куççем —
тĕнче тĕнни!

...Куççем — сӳнме.
Куççем —
хăрăр! —
хăвăл...

Куççем — çиме!
Йăтă,
ме!

Йăмăк...
Йăл!......... —

айваннисен йăли.
Йăлăхнисен йăли —
йăлă.
Ан йăлăн,
йăмăк:
йăлă —
йăмăлнисен йăли.
Пĕр айăп:
пырайă...-
ттăм-халĕ:
пăр айĕнче
пĕр кайăк —
(хĕл варринче
пăр кайĕ!)

Ан йăпат —
юмăç
юла
юпать
(юплĕ çулпа
чупать).

Йăнăшни-и?
Йынăшни-и?

Çăлтăр йăлтăртатать,
куçа йăмăхтарать —
йăмать,
чăмать...
ăмма?
ăнман!

Сирĕн тӳпĕр — тӳпере.
Пирĕн — хĕпĕртӳ пĕрре:
«Хӳхĕм хӳшĕ» çук çĕре,
Ӳхĕ хӳххи çук çĕре.
Çурçĕре?
Çук, лере.

Мĕн юлĕ
ман йăлкăн
куçăмран? —
Çил улĕ
хушăран —
йăпан:
хăвăл —
витĕр —
тăвăл!
Тăвăр?
Хăвăл —
тавах турра —
куçне кура!

Йăлтах —
хампа пĕрле.
Йăх-ях, кĕрле!
Татах
Хăна-вĕрле
кĕрекере...

Йĕрех,
йĕрĕх!..

Ик куçăмран
çĕн ĕмĕре
мĕн
куçĕ?
Йăх-тăхăм ман —
йăптăх тăкан
йăтă
куçĕ...

**8**

Çÿçрен — çÿçе!
Вĕçрен — вĕçе!
Вĕçĕр!
Вара — киле,
Вара —...вилер
кĕçĕр...

...Тĕсĕр
кĕçĕр,
тĕсĕр:
уйăх çинче —
куç кĕски,
куç кĕскинче —
Куççăрпи-сем.
(Куççăрписем —
Уйăхписем.)

Тĕсĕр:
тĕссĕр
тĕкĕр —
тĕпсĕр!

(Шĕкĕ те çук,
лĕкĕ те çук.)

кунтах-ĕçке
чунсен ĕçки!

Тĕсĕр
эсĕр,
тĕсĕр:
Куçсăрписем — тĕссĕр,
кӳлеписем — хĕсĕр,
(Куçсăрписем — пӳсĕр!)
Куçсăрписем, тӳсĕр.
Тĕсĕ пире, тĕсĕ!
Куçсăрписем — пилсĕр,
Куçсăрписем — килсĕр,
Куçсăрписем — нимсĕр,
анчах —
вилĕмсĕр!

*чӳк, 1994*

# ПАЛИНДРОМСЕМ



## Тип шар

*Поэма*

### 1

Кӑвак авӑк —
каҫ кӳлӗмӗ — кӗмӗл:
ӳк ҫак
енне!
Ут ҫак енне — каҫ ту.
Юрату ҫутар, уй!

И, ту!
Ҫутӑ каҫ.
Ҫакӑ — ту ҫути,
Хӗлпе шеплӗх!

Эп ӳсӗ теп ӳт, тӳпе, тӗсӳпе:
пӗлӗт ӳстерет.
Сӳтӗлӗп
Хам: юмах!
Уйӑх кӳпӗ-шим* — ишӗ:
(пӳк хӑю).

Утар.
Уй.
Юрату...—
Юрӑ! Хӑр уй
пасарӗ — чӗр асап!
Хам асапа хӑнӑхап:
асамах!
Хӗле, ҫӳҫелӗх
ӗретне ҫӳҫентерӗ:
Хам уй пек эп! —
юмах...

Ан, юрӑ, юх, уйӑр уйна.

Те сиплӗ хӗл писет?
Палӑру — ҫак папка:
«ҫурӑлап!»
теет.
(Усса!
Сӗмленӳ, йӳнелмӗ сассу.)
Пӗлӗт ӗҫӗ: ҫӗтӗлӗп
тет.

---

* Кӳпӗ уйӑх — тулли уйӑх.

Е тертре те —
канăç: çурăлăр уççăн ак:
харăс!
Хам ăсап пасарăва —
савăр асаппа, сăмахсăрах...

**2**

Манашкала — валак: шанам,
Ар, илеме. Лира!
Е тӳпе кӳтрĕ?
Лира кала, валак!
Ар — илĕртӳ, Кепӳ* те.

(Нăш!.. — сарă хĕрĕ хăрасшăн,
Сар ачана чарас.)
Ма? Çухатсассăн ăс —
сас та хуçам:
перĕн — ĕнĕреп.

ăн та, ху та — тухатнă —
çунатлă!
(Çăлтан уç
тӳпе-тинĕсӳсене — тен,
эс ӳсĕн-и теп, ӳт.)

Эп ӳсĕ теп ӳт, тӳпе, тĕсӳпе...
Ах, çумăру — хăйă-вăйă хурăм:
уç-ха

* Кепе — Турă паракан ырлăха çынсем патне, çынсен кĕллине Турă патне çитерекен аслă пирĕшти.

ен çӳçне!
Çуталу çемми кимме çулать: уç
ен çӳçне,
ир тĕтри!
Ир тĕтри (хитри — хирти —
хир тĕтри!) —
ир учĕ — чунăмăн учĕ, чури:
Ут, пучаха чупту...

**3**

Çĕре «Тĕнĕлӳ пӳлĕнĕ» терĕç.
Эпĕ: Йĕретним, минтерĕ йĕпе?
Çĕр-Ама, пил-и памарĕç?
— Атмăрта хуçана çухатрăм та...

(Ырă тăри!..)

Шав?! — ăйăру:
Турă, йăваш,
Хăюсăр ăрăсу*, йăх —
Турăсăр ут-
рăмăр,
утрăмăр ту-
рăсăр:
ĕнерӳ кӳренĕ...
— Антăхнă ăн хăтна
Пĕтерĕ-и-ха татах, — йĕретĕп...

* Ă р ă с — телей.

Ана
(Лиана, ылханăвăн ăвăн, ах,
лиана!)
ил
пил, ип!
Телее чеелет.
хĕл, ил лав
ана
валлилĕх.

Пăхар парăва...
. . . . . . . . . .

**4**

Авăра прахăп
Уйăха (хăю —
хăй уйăх,
уйăхра — сар хăю:
уйăхри хир — хăю!)
Юмăçу — шуçăм, уй.

«Ĕретлĕ пенĕ» мĕне пĕлтерĕ:
путин-и — туп!
Путиш унсăр ăс нуши: туп!

Тухăç — уçă хут,
ик енĕ — кĕнеки:
анăç ăна
ишет те-ши?
Ӳлевĕ — хĕвелӳ.

И, самана маси!
И, кунăмăн уки!
Çĕнел — икĕ киленĕç.
Ара:
«И, кунăмăн уки —
Эс!» — тенĕ çемме çĕнетсе.
Çĕнел! Кĕç çĕкленĕç
куçĕсем — эсĕ çук:
çĕн анăçăн анĕç...

Ту, вăйă — вут:
Ара, çутту çара,
шĕпĕлти пит лĕпĕш...

Ӳт ĕмĕрĕ сӳлетĕ,
вĕтелӳсĕр ĕмĕтӳ —
(пăр пулĕ! Хĕл! — упрăп,
çĕр пулĕ! кĕл! — упрĕç...
Ер, ĕмĕтĕм, ĕмĕтĕмĕре!)
те сисет?
Те çиçет?
(Тен, ӳсĕ?!.) — сӳнет...
Ир...
Ĕмĕт тĕнĕлĕ терĕмĕр ĕмĕре:
тĕлĕнĕттĕмĕр-и?

**5**

Ар-и шиклĕ?
Мĕн кӳтет — ĕнтĕ пĕтнĕ
тет,

ӳкнĕ мĕлки, шыра.
Пĕлеймерĕ чĕрем: е лĕп?..

Аҫа!
Ҫиҫĕ хĕвелти пушар!
Тăпра мар ку, пукра мар:
пăтрашу питлевĕ: хĕҫ-иҫ
ҫиҫĕмĕ — ҫиҫ!

Ирпе терт-и хитре?
Теприı —
пĕр ӳкĕнекенĕ — кӳрĕп
тет
илем (эмел-и?)

Сăнару пĕтнĕ ĕнтĕ:
пуран, ăс.
Нару — суран,
хăлатсăр — ăсталăх.

Сипĕ — чап апачĕ? Пис!
(Нĕр ипĕ — пирĕн.)
Ҫĕнĕ чанпа чапна чĕнĕҫ:
эп — ыррипе,
апла сум — усалпа...
(Сас!
Икшер ӳхĕ — хӳрешки.
Пăхрăм ăмăр: хăп!)

Ар, ту вутра мар?!
Ту — вутра!..
Туйрăмăр ют.

Тусанна сут,
тусене сут —
тусна ан сут!

Алсам — юта туймасла:
ал сарап ăшă парасла —
ал сарап алла парасла!
Ыраттар: ы!
ы-ы-ы... —

Çил-иç:
çĕклĕ кĕл кĕç...

Е пит нӳрĕ?
Чикĕри ирĕк-и чĕрӳнте?
Атну, ну... чикĕри ирĕк-и чунунта?
Эп тӳпĕре херĕп* ӳтпе
çĕклĕп — пĕл! — кĕç:
кĕтĕр — ирĕкĕр ирĕ тĕк.

Е тĕлĕ — тĕлĕклĕ тĕл:
кĕлĕ тĕлĕ те.
(Хĕл кĕлли — «пиллĕклĕх»:
Шăллă, мăка кăмăл — лăш!)

Тутă хăвна ман, вăхăт-ут.
Манăçу, пуçăнам:
Халçăм, асамăçлах! —
Ятсăр ăстай.

Сасă!
Çунатлă çынни!

* Херĕп — çирĕп мар, черченкĕ.

Ҫăлтан уҫă сас:
Ырă тăри,
Уйăхра мар хăю,
ан: авă, ҫĕрĕ куну — кĕрĕ ҫăвана.
Ан: юрă, юхах, уйăр уйна.
Уйăхра мар хăю.
Ан: ҫук пăтрашу,
Хĕмĕ — ху:
шартап куҫна.
Уйăхра мар хăю.
Ан! Авă ҫĕнĕ куну кĕнĕ ҫăвана...

Эпир пăтрашар тăприпе...

...Пăта Ту
енне
утатăп.
Пăталатăп
хама хамах:

Асапа хăнăхап, аса,
Пăта, хăнăхатăп...

*2006*

## Юрăсăр уй

*Хÿхлев*

Пĕлĕчĕ вĕчĕ. Лĕп.
Шурă, хăруш
юрăсăр уй.
Мер(ĕ)ченлĕ тĕлне чĕрем
те сисет?

Тараса пасарать...

Юр — уй:
сÿнми куçĕсем* Эсĕ çук-им, нÿс?..
Ешер, этем ĕмĕчĕсем — эсĕ!
Чĕм ĕмет эреше:
сехет, нÿр ĕмĕрÿнтех эс.

Хĕл мĕскĕн. Ĕнĕк сĕмлĕх.
Тен, ĕнерлĕх — сĕм-и?
(Симĕс хĕлрен — ĕнет).
Е пир ухнин хурипе
ир ухнин хури?
(Эпир ухрăмăр хурипе).

Ир авă.
Килĕшÿллĕ кĕллÿ —
шĕл-и, кăвар-и?
Ирĕ! Чĕренĕн ĕнерĕ чĕри!
Хăпĕ пăхмасан асам, хăпĕ — пăх:
Илемĕ! — Çĕçĕ вĕçĕ!

* «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă» тет чăваш.

Çĕмел-и? —
mersi
хирти, хитри — хисрем*
(ĕнсӳ тӳснĕ...):
тух, алапа сапала хуть...

(Лăках сăсăл ăс — ăс-хакăл.
ăшу — пушă).

Пĕлетĕр-и, ирĕ те лĕп.
Пĕлĕчĕсенĕн ĕне сĕчĕ лĕп.
Çĕртен ĕçетĕп-çиетĕп эпĕ те-иç:
пĕт е...
Çĕнетрĕç:
çĕре тара тыт ара терĕç.

... Е пĕлĕчĕсене: тен, эсĕ чĕлĕпе,
тет
хăла халăх. —
Çитерет-иç.

Сукмакăм, мăкам, кус,
Атă хăвалаcа хасала** вăхăта.
Пĕтмĕ йĕм тĕп!***
Шыра Турă çулĕсене, несĕл,
Уç, ăру, тар, иш...
Иш! Унсăрăн «ăрăс нуши»

* Хисрем — хывăх.
** Хасала — айăпла.
*** «Йĕм тĕп çĕре тивиччен» Петĕр Хусанкайăн йĕркисене асра тытса çырнă.

çиет те-иç
ерипе пире.

Имлев-и кивелми?
Мел писрĕ-ши?
Ишĕр — сиплем.

Сăпай апăс*,
пĕлӳ кӳлĕп,
е, тен, ват хумсен
ӳсес е сӳнес мухтавне те.
Хамах, Руç — урхамах,
Ут лăпах — хапăл ту.

Те тĕпри ир пĕтет? —
Пĕри çирĕп.
Пĕри-çке пĕлӳ чулĕ пек çирĕп!
Тану** çунатлă вăл, тану çунать.

* * *

Асра — капăр уйрăлу:
Улăр юрăпа карса.
(Хам юрăпа канăп,
ăна — капăр юмах.)
Эпĕ чурăс ăсăр учĕпе
ĕрĕхрĕм — ĕнекен ĕмĕр хĕрĕ.
Мĕкĕр, ирĕкĕм!
Сӳтем ĕмĕрĕмĕме — тӳс!

---

* Апăс — чӳклевçĕ.
** Тану (*диал.*) — вырăсла «давно» сăмаха чăвашлатнипе пулнă.

Е терт — ӳтре те:
ыраттарать! Тар-и?
Калеме — мел, ак:
Тар-иҫ ҫырать —
Юн! Уй!
Ёмĕт — пĕчĕккĕ чĕптĕмĕ.

Мĕкĕр, ирĕкĕм,
Хĕлĕхпе! Шеп хĕлĕх!
Ӳкерĕ тĕрекӳ —
ĕнерĕвӳ вĕренĕ!
Тӳсем ĕмĕрĕмĕме — сӳт.

Сар алăк кăларас:
Ан та, вăхăт, уҫ ҫутă хăватна!
Шухăш — урăхлату: ҫутал!
Хăрушă...
Хуш:
Ҫутă хăвата, вăхăт, уҫ!
Ӳнерĕ — (вăлт, айван ăс) —
сăнав ятлă вĕренӳ.
Пĕтĕмлетĕвӳ: вĕтелмĕ тĕп.
(Йăх-ăру таса — таса Турă хăй.)

Хăратнăран ăсу — сăнарăн. Тарăх!
(Мел — тинĕсĕн: итлем.
Кĕрĕ тĕрĕк.
Ырра мар у хура марри.)
Пăтала — калатăп:
Йăх-ăру таса-таса Турă хăй.

10. Марина Карягина.

Эпĕ çу кусĕпе
пăхăп,
Пăра парăмăра парăп —
Итле: пĕтĕленĕ çуллу —
çĕнелĕ тĕпелти
сас,
ую.

Пĕл, эсĕр-им, ирĕ селĕп,
куç «селĕп» — ан каç леш енне!
Шел, çакна пĕлес çук:
Ир-и хирĕçтерет, çĕр-и, хир-и?
Мимесем-им?
(Миме — тем-им?)
Ĕç — ӳтре, ертӳçĕ:
ăшу — пушă.
Ӳт те — туму, теттӳ.
(Аркă ма тамăкра?)
Алла чар ачалла.
Еткерĕ те тĕрек те,
тӳрĕр — ӳт:
аташ та, патша та.
Пĕтĕ* пĕр тупсăм:
ăс путрĕ — пĕтĕп:
Эпĕ пысăк-и-ха, мăскал-и**?
Пылак сăмах — ик ăс ипепе:
Шел-и-ха?
Мăскал-и, пылак сăмах-и леш?

* Пĕтĕ — пĕтĕленнĕ.
** Мăскал — ылтăн.

Ытам — асамат-и?
Тӳлевĕ — хĕвел, ӳт!
Ĕç ăна тĕкĕннĕ — кĕт:
анăçĕ хĕрелĕ — вĕлерĕ:
хĕç ăна тĕкĕннĕ.
«Кĕт, анăçĕ!» —
тетĕп эпĕ çанă мăнаçĕпе.
Пĕтет
е тӳрĕ йĕрӳ те?
Е тӳрĕ  хĕрӳ те —
пĕтетĕп:
эпĕ чурăс ăсăр учĕпе
ĕрĕхрĕм — ĕмĕр хĕрĕ.
Хам: ăсчах  хач! сăмах
татать,
тетĕп — пĕтет...
Усăсăр ăс — ăсу...

Шелсĕрĕ тĕрĕс леш:
ăру та — Турă,
ватă таваăру та — Турă...

* * *

И, вăйланан ал йăви!
Кайăк акă як!
ӳкрĕ — йĕркӳне те пĕлĕп?
Е, тен, ӳкрĕ йĕркӳ?
Ишрĕмĕр-ши?
Ишнĕ: мехелех е... мĕн-ши?

Эпĕ — чăхă вăхăчĕпе
ĕнтĕ пурăнакан: ăру пĕтнĕ,
Çĕре лекрĕ йĕмĕ —
йĕркелерĕç...

Кĕтрет каçĕ çак тер тĕк,
Çакăнта тет ĕмĕте татнă каç.
Хам — ăсĕн тĕп ĕçĕ:
пĕтнĕ сăмах.

Эпĕ — чăхă вăхăчĕпе...
Авăт! Ял-и, чĕртрĕ чану чуна,
Чĕртрĕ чылай тăва.
Утрав та — патвар ту.

Серепене перес
ирĕкĕ шĕкĕр-и?..

Çакăнта терĕм ĕмĕре татнă каç.
Çакна калакан каç.

Çурта-Ту çутать Руç...

*çу, 2005*

## Бельман уявӗ*

Ҫӗр, ар, ӑн — янӑрарӗҫ:
Харӑс ӗҫӗр!
Укҫасӑр ӑсаҫ — курӗҫӗ сӑрах.
— Ҫӗнетрӗмӗр ӗмӗртен: ӗҫ
тепре шерпет!
— Ҫӗклем эмел кӗҫ —
ӗҫ, ҫав асама саваҫҫӗ.

— Микаэле, ак, им! —
теҫ. — Ӗҫет!
— Тав сана, сват, —
терӗ вырӑсӗ. —
Сӑри вӗрет...
Ав, Атнерӗ:
— Кӗрен тава, —
тет.
— Кил, «Лик»! —
тет
Илли...
Ик Кенин екки —
Ик генин екки...

— Енил, сӑра пар, ӑслине!
— Ил, сӑру пур, ӑсли.
Харӑс! ӑру пур — ӑсӑрах.
Харӑс! Сӑру пур ӑссӑрах.

* Швед юрӑҫи Карл Микаэль Бельман юхӑмӗ 10 ҫул тултарнӑ ятпа.

Ĕçкӳ, чӳкçĕ,
тасах, лайăхах-ха —
Хăй алхасать,
Урă пушă шупăру
çеç.
Ĕç, çар, ăн — янăраççĕ...

Сăрăр — ăрăс!
Сăра — парăс!
Сăра мар — ăс:
«Эпĕ чап, ăс сăпачĕпе —
пĕтерӳçĕ — çӳретĕп», —
тет...

...Эпĕр ĕçрĕмĕр çĕрĕпе.
...Ĕнтĕ пур ăсу — сăру пĕтнĕ.

*ака, 2005*

## Уçă тытăçу

Хаяр ĕмĕрĕм! Ĕмĕрĕмĕр!
Ай-ах!
Ăса, сăн-сăпата пăснă сасă
юптарать: пуй!
Пасарĕ — чĕр асап.
Тарăхать, ахăрать
Шурăхнă Сăн — хăруш...
Шăппăн юнамалла ман —
юнăп: пăш!
Ахрата тар-ха!
Эпĕ хам ăслă çăл сăмахĕпе.
Пăхап — сăнать тан ăспа:
Хăп!
Эпĕ — варт!
Лайăх ухă ялтравĕпе
пăтала — калатăп:
«Ме, çĕн — сӳнĕ хĕн,
ӳснĕçем!
Ме сӳнен ĕненӳсем!»
(Çĕнĕ-ха, çĕнĕ...)
Кӳлештерет, шел,
ӳкĕнĕç: ах, ĕнĕç,
Утса иртӳçĕн ĕнĕç
(ӳтри: ас ту!) —
ĕмĕчĕсем...
(Эсĕ — чĕмĕ!)
Ĕн, ĕмĕрĕн нĕрĕ-мĕнĕ,
ĕмĕчĕ-чĕмĕ
ытти-хытти...

— Çĕр алара вараларĕç —
Тасатуçă, çу, тасат,
çутă хăт уç.

— Ара, çутă, хăватлă вăт Ту.
— Вут-тăвăлта вăхăту — çара!

Шăмарах харам, ăш:
Ик ăс ипĕ пысăк-и?
Икĕ чĕптĕм ĕмĕт пĕчĕк-и?..

Ирĕкĕр-и? —

Ирĕк — ĕнĕкĕр-и?
Ирĕк — ĕлĕкĕр-и?
(Е тетте теттĕмĕр?)
«Ĕмĕт те тетте те»
тес-и — писет...
Хапăллăпах:
«Çитетĕпех эпĕ, — тет-иç, —
леçме...»
Çич хыса сыхчи, çемçел!
Тасат!
Тасат!
Тасат!

Ма тăвакан ака вăтам?
Элле, мел çĕнĕлле:
меллĕн ĕçлемелле?

Çул-и ку?!
Çук-и куçу?

Кил, уҫ
ҫӗнӗ тӗн. Ӗҫ.
(Ҫӗнӗ тӗн — ӗҫ!)

Ермӗ кӗлӗ...
Тӗлӗкӗмре —
Турӑпа капӑр ут.
Шар ватӑ тавраш.
Сас:
«Эп — тӳпе, ҫӗр ӗҫеп ӳтпе».

Ҫӗр тасатрӗҫ:
ӗҫӗ — ват халӑхӗн.
«Ӑс-сӑнӗ хӑлах та,
вӗҫӗ,
ара, вилӗмӗ — кӗмӗл-и вара?
Йӑл Ту вилӗмӗ кӗмӗл-и? Вутлӑ-и?» —
тет
Аслӑ Ят.
«Хӑла — хӗретрӗмӗр, —
терӗ халӑх тайӑлса. —
Алпа ҫавӑтрӑмӑр Тӑва ҫапла:
«Утрӑмӑр, Ту!..»

Е тӗм хӑрать? —
Йӑх турачӗ! Чар!
Ут хӑй тарӑхмӗ те,
тарать утсах — ас тутарать:
«Харӑс ут, тус,
ут Тусӑрах.
Утсан — Аслӑ ҫул уҫӑлсан — ас ту:

Хал та Вăхăту — çутă хăватлах».
«Харăс ут Тусăрах?
Тусăм, антра — карт!*
Намăс, ут...»

...Çĕр-и? Хĕсĕк-и никĕсĕ?
Хирĕç —
Ишĕçĕ!
Ăру татăлать, алă та —
Турă ĕçĕ-ши?
Ишĕр — тивĕç...
Çĕçĕ витĕр утрăмăр.
(Турĕ — тивĕçĕç).
Çивĕч чĕннĕччĕ виççĕ — витрĕ-ши:
Тасат! Тасат! Тасат!

Мĕскĕн, ĕнĕк сĕм...
И, ку-тер тĕксĕм-и?
Симĕс кĕтрет уки,
тасат!
Уйăх сĕтĕрĕ тĕс — хăю:
тасат!
Ырă тутăр-и
çăмăр-ăрăмăç!

Ирĕ те тĕлĕрин.
(Ирĕлĕ тетĕр-и?
Ирĕ чĕрĕлĕ те —

* Карт — тупа.

тĕлĕрĕ чĕри...)
Тасат!

Ен! Ил, сăн ил,
(Сарăмсăр ăсмăр Аслин ăслине.)
Ёлĕкрен ĕнер кĕлĕ —
тасат!..

Янрашу, пушар...
Най!*
Янла, палнай**!
Хĕрĕ! Пике пĕвĕ кĕвĕ пек-и?
(Пĕрĕх!)
Манăç çанăм,
Ташласа тасал шат!

Эпĕр — ĕмĕр, ĕмĕт —
тĕрек-ши?
Тишкерĕттĕмĕр ĕмĕрĕпе!

Сăнăр, упрăр —
пурăн, ăс!

Малăр — юмах.
Халаппалах
Хам уйрăлам:
çитет-иç ĕмĕтӳ —
йӳтĕмĕ çитет-иç.

*2009*

---

* Най — музыка инструменчĕ.
** Палнай — чăвашсен авалхи музыка инструменчĕ.

## ТУПМАЛЛИ

**Хӗл каҫнӑ кӑмӑл**


Хура пӑнчӑ . . . . . . . . . . . . . . . 3
«Вӗҫекенни вӗҫет...» . . . . . . . . . . . 4
«Уҫас ҫулӑм — ҫул мар...» . . . . . . . . —
«Ункӑра пӗр авӑк савӑк...» . . . . . . . —
«Манса каяссӑм пур ята...» . . . . . . . 5
«Куҫ суйласа илнисем...» . . . . . . . . 6
«Ир...» . . . . . . . . . . . . . . . . 7
«Пӗлмен уяв...» . . . . . . . . . . . . 8
«Ура утать-и ҫӳлелле?..» . . . . . . . . 9
«Уйрӑм эпир...» . . . . . . . . . . . . 10
«Йӗпхӳ ҫӑватчӗ пит ҫине...» . . . . . . . 11
«Алӑсӑр, сӑмахсӑр, сассӑр...» . . . . . . 12
«Кӗр вӗҫӗ кӗҫ...» . . . . . . . . . . . 13
«Эс — шартлама хӑвна юраншӑн...» . . . —
«Юра тупа арпаштаратӑп...» . . . . . . . 14
«Ҫут пуласлӑха ҫитес тесе...» . . . . . . 15
«Тӳс, тусӑм, тӳсӗм пӗтиччен...» . . . . . 16
«Эп хӑйӑ чӗртрӗм хӗвеле курма...» . . . . —
«Темпе тем лекет...» . . . . . . . . . . 17
«Ӗмӗр килсен...» . . . . . . . . . . . . 18
«Ман каҫӑ пур...» . . . . . . . . . . . 19
«Эс ҫывӑхри пӗр ҫӑлтӑра...» . . . . . . . —
Саспа тата сассӑр хам тӗллӗн калаҫни . 20
«Ҫутӑ...» . . . . . . . . . . . . . . . 21
«Унта-и...» . . . . . . . . . . . . . . 22
«Умрах эс — ҫук...» . . . . . . . . . . 23
«Сӑмахӑма...» . . . . . . . . . . . . . 24
«Хӑҫан та пулсан...» . . . . . . . . . . 25
«Тапса тухнӑ куракӑ мӑнӑш...» . . . . . 26
«Хирте сип-симӗспе...» . . . . . . . . . —
«Янкӑр ҫутӑ кун...» . . . . . . . . . . 27
«Пас тытнӑ кун!..» . . . . . . . . . . . —
«Инҫе-и, ҫывӑх-и...» . . . . . . . . . . —

«Путма çук — ăшăх!..» . . . . . . . . . . 28
«Çӳле вĕçес — лутра...» . . . . . . . . . . —
«Мĕнпур пек терт каçчен тесе шутлатри?..» 29
«Асаматлă куну...» . . . . . . . . . . . . 30
«Те çулсем хăвăл пек...» . . . . . . . . . 31
«И уйăрчĕç пире!..» . . . . . . . . . . . 32
«Суккăр теччĕр тĕттĕм каç...» . . . . . . . —
«Те пулнă, те пулман...» . . . . . . . . . 33
«Шурăмпуç пек шурĕ вăхăт...» . . . . . . . 34
«Мĕншĕн куç пăвать тĕнчемĕр...» . . . . . 35
«Эс — хĕрес...» . . . . . . . . . . . . . —
«Кам вăрă мар?..» . . . . . . . . . . . . 36
«Хурçă хĕрарăм эп...» . . . . . . . . . . 37

**Çур çĕр варринчи хĕвел**

«Çур çĕр...» . . . . . . . . . . . . . . 38
«Тĕнче тусанĕсĕр тасалăх...» . . . . . . . 39
«Хам тавра вăр-р çаврăнаттăм...» . . . . . —
«Çил пĕлĕте сӳсе ӳкерчĕ...» . . . . . . . 40
«Чăлăм куç хупмарĕç ку енче...» . . . . . —
«Эп — ту мар та — урăхла ӳсеп...» . . . . 41
«Çак самантри илемшĕн-шим ку лам?..» . . —
«Кун куçне хупать те...» . . . . . . . . . 42
«Йăлт!.. . . . . . . . . . . . . . . . . —
«Çăлтăр тĕпренет пуль...» . . . . . . . . 43
«Ылтăнĕ мар мана...» . . . . . . . . . . —
«Çуха пыра пăвать...» . . . . . . . . . . 44
«Йыт пырши...» . . . . . . . . . . . . . 45
«Хĕлле «юманлăх эпĕ» терĕ...» . . . . . . —
«Çав çăлтăр куçăмран пăхать...» . . . . . —
«Эй, зебра, йăрă ăйăрăм...» . . . . . . . —
«Шыв-шур нăрри...» . . . . . . . . . . . 46
«Ыран манра мĕн пуласси...» . . . . . . . —
«Хăш хушăкран пăхсассăн та...» . . . . . . 47

«Кĕре никам кĕтмен çĕрте...» . . . . . 47
«Тĕнче курас килниччĕ ку...» . . . . . 48
«Тек ыран пулмасть пек — ырă...» . . . 48
«Пĕтĕмпе...» . . . . . . . . . . . . . 49
«Ăна тӳпе йăтса çӳрет...» . . . . . . . —
«Тӳпе! Тупа пур ман...» . . . . . . . . 50
«Ӳт-пĕвĕм — пĕлĕт хăйминчен...» . . . 51
«Улшăнанçи пулать те уйăх...» . . . . 52
«Кун çутинчен писсе çӳреп-и...» . . . . 53
«Сас палли çырмассерен...» . . . . . . 54
«Чи кирлĕ сăввăма...» . . . . . . . . . 55
«Хăйăр купи ачисемччĕ эпир...» . . . . 56
«Тĕнче-им эп — ман ăшăмра вилме?..» . 57
«Туслă-и вĕсем çаплах...» . . . . . . . 58
«Те пăсланса пĕтесшĕн çут тĕнче...» . . —
«Чечек варринчи пыл хурчĕ...» . . . . . —
«Яланлăха! тесе ĕнен те...» . . . . . . 59
«Чул чĕмсĕрлĕхĕнче çак кĕлĕ...» . . . . —
«Мĕнле кăна халăх пулчĕ ку...» . . . . 60
«Сăвăсерен — чăнлăха çывăхрах...» . . —
«Çĕнĕ çĕрçуллăх, çĕнĕ пинçуллăх...» . . 61
«Атте тесен лаштра юман...» . . . . . 62
«Эп Улăп йăхĕнчен пил илнĕ...» . . . . 63

**Тăватшар йĕркен** . . . . . . . . . . . 64

**Поэмăсем**

Уйăхпа хĕвел . . . . . . . . . . . . . 91
Телейсĕр куççем çинчен хывнă юрă . . 116

**Палиндромсем**

Тип шар . . . . . . . . . . . . . . . . 133
Юрăсăр уй . . . . . . . . . . . . . . . 142
Бельман уявĕ . . . . . . . . . . . . . . 149
Уçă тытăçу . . . . . . . . . . . . . . . 151

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего и старшего школьного возраста

**Карягина (Степанова) Марина Федоровна**

**ÇУР ÇĔР ВАРРИНЧИ ХĔВЕЛ**

**СОЛНЦЕ ПОЛУНОЧНОЕ**

Стихи, поэмы

*На чувашском языке*

Редактор *Г.А. Антонова*
Художники *И.А. Улангин, Е.Н. Кузьминова*
Художественный редактор *С.А. Бритвина*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректор *Н.Н. Маслова*
Компьютерная верстка *Е.Ю. Ермолаевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93-95 3003.
Подписано к печати 27.03.09. Формат 70х90 1/32.
Бумага офсетная. Гарнитура Прагматика. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 8,4. Уч.-изд. л. 4,51.
Тираж 2000 экз. Заказ № К-506. Изд. № 23.

ГУП Чувашской Республики
«Чувашское книжное издательство» Минкультуры Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Карягина М.Ф.**

К 27 Çур çĕр варринчи хĕвел: Сăвăсем, поэмăсем / М.Ф. Карягина. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. — 158 с.
ISBN 978-5-7670-1667-9

М. Карягина сăввисем сăнарлăхпа, туйăмлăхпа, шухăш тарăнлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Вулакан çакна кĕнекери малтанхи йĕркесенчех асăрхать. Ансат мар сăвăсемпе поэмăсемсĕр пуçне кĕнекене палиндромсем те кĕнĕ. Палиндром тесе икĕ енчен те пĕр пек вуланакан сăмахсене, йĕркесене, предложенисене, сăвăсене калаççĕ. Поэт çакăн пек кăткăс жанрта та чăваш чĕлхин пуянлăхне, шухăш ирĕклĕхне кăтартса пама пултарнă.

**УДК 811. 512. 111**
**ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-5**

**ISBN 978-5-7670-1667-9**

70,00



Марина КАРЯГИНА —
вун икĕ кĕнеке авторĕ.
Чăваш çыравçин хайлавĕсем
вырăсла, шведла,
турккăлла пичетленнĕ.
1995 çулта «Хум пăшăлта-
тăвĕ» ятпа тухнă пĕрремĕш
кĕнекишĕн ăна
Чăваш Республикин Çамрăк-
сен патшалăх премине панă.
«Хальхи чăваш сӳрĕк
поэзине (...) чăн поэтла
çĕн сывлăш кĕртнĕ»
(А. Хусанкай хаклавĕ) сăвăç
чăваш литературинче
пуçласа палиндроми месле-
чĕпе сăвăсемпе поэмă-
сем çырнă.
1996 çултанпа РФ Писатель-
сен союзĕн членĕ.

Чăваш
кĕнеке
издательстви